ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПЕРЛЕШĔР!

# КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул Январь 17 ШАМАТКУН № 11 (8920)

35-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

*„Халăха выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем, çăмăл промышленноçа чĕртавар нумайрах та нумайрах парса тăма выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе малалла тата ытларах вăйлатмалла... Колхозсемпе совхозсенче выльăх-чĕрлĕх йышне ӳстерсе пынă вăхăтрах, вĕсен тухăçлăхне ӳстерсе пырасси малашне те выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри тĕп задача пулса тăрать“.*

**Г. МАЛЕНКОВ, — ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн ĕçĕсем çинчен партин XIX-мĕш съездне туса панă отчетлă докладран.**

## ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ ЙЫШĔПЕ ТУХĂÇНЕ ӲСТЕРЕССИШĔН СОЦИАЛИЗМЛĂ ĂМĂРТĂВА ВĂЙЛАТАР!

Юлашки çулсенче пирĕн çĕршыв выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре пысăк çитĕнӳсем турĕ. «Халĕ ĕнтĕ, — тесе каланă Г. М. Маленков юлташ партин XIX-мĕш съездĕнче, — колхозри выльăх-чĕрлĕх, совхозсенчипе пĕрле, выльăхсен хисепĕ енĕпе те, выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем туса илес енĕпе те çĕршывра чи пысăк вырăн йышăнса тăрать. ССР Союзĕнче аш-какай, сĕт, çу, çăмарта, çăм тата тир енĕпе пĕтĕм продукципе таварлă продукци вăрçăччĕнхи шайран иртрĕ».

Анчах ку вăл пысăк ĕçĕн пуçламăшĕ кăна-ха. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекенсен халăха выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем, çăмăл промышленноçа чĕртавар çителĕклĕ туса пама малашне питĕ пысăк ĕçсем тумалла пулать. Партин XIX-мĕш съезчĕ выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри работниксем умне ответлă задачăсем кăларса тăратрĕ. Вĕсен колхозсемпе совхозсенче обществăллă выльăх-чĕрлĕх йышне ӳстерсе пымалла тата çав вăхăтрах выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне хăпартмалла.

Умра тăракан задачăсене палăртса, парти çав задачăсене ăнăçлă пурнăçламалли майсене те кăтартса пачĕ. Обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессине вăйлатса пыма, чи малтан, мĕнпур колхозсемпе совхозсенче выльăх апачĕ нумай туса хатĕрлеме çирĕп никĕс туса хумалла, выльăхсем валли карта-витесем çителĕклĕ тумалла, çавăн пекех тата фермăсенче ĕçе анлăн механизацилемелле.

Парти кăтартса панă çулпа пырса, пирĕн республикăри нумай колхозсем обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре чылай пысăк çитĕнӳсем турĕç, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе колхоз хуçалăхĕн пысăк тупăш паракан отраслĕ туса хучĕç. Сăмахран, Муркаш районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозăн 1952 çулта укçан илнĕ пĕтĕм тупăш 652 пин тенкĕ пулнă пулсан, выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем колхоза 398 пин тенкĕ тупăш панă. Çав шутран 260 пин тенкĕ сыснасем ĕрчетсе илнĕ. Етĕрне районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан, Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан, Чкаловски районĕнчи «Гвардеец», Улатăр районĕнчи «Победа» тата «Путь Ильича» колхозсем, Пăрачкав районĕнчи Максим Горький ячĕпе тăракан тата ытти нумай колхозсем выльăх-чĕрлĕх йышĕпе унтан илекен тупăша çултан-çул ӳстерсе пыраççĕ. Колхозсенче пысăк тухăçлă обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекен мастерсем нумай ӳссе çитĕнчĕç, вĕсем хăйсен пархатарлă ĕçĕпе колхозсен обществăллă пурлăхне ӳстерсе пыраççĕ.

Анчах пирĕн республикăра нумай колхозсенче обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетесси çине çителĕклĕ пăхмаççĕ-ха. Çак кунсенче выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлекен малта пыракан работниксен республикăри канашлăвĕ пулчĕ, — канашлу ĕçне уйрăм колхозсен председателĕсем тата ялхуçалăх специалисчĕсем те хутшăнчĕç. Канашлура обществăллă выльăх-чĕрлĕх йышĕпе тухăçлăхне ӳстермелли заданисене пурнăçламаннине, хăшпĕр районсенчи парти, совет тата ялхуçалăх органĕсем обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе çителĕксĕр ертсе пынине кăтартакан фактсем нумай илсе кăтартрĕç. Куславкка, Сĕнтĕрвăрри, Октябрьски тата ытти хăшпĕр районсенче обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç уйрăмах япăх тăрать. Сăмахран, Куславкка районĕнче иртнĕ çулта обществăллă выльăх-чĕрлĕх йышĕ, ӳссе пырас вырăнне, çакăн чухлĕ чакнă: майракаллă шултра выльăхсем— 15 процент, сурăхсем — 16 процент, сыснасем—6 процент. Чылай колхозсенче выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхĕ, пĕчĕккĕ, выльăхсем вилнине те пĕтерсе çитермен-ха. Выльăх-чĕрлĕх пăхакансен ĕçне организацилес енĕпе, çавăн пекех обществăллă выльăх-чĕрлĕхе пăхса усрас тĕлĕшпе пысăк çитменлĕхсем пур. Çаксем пурте государствăна, колхозсен обществăллă хуçалăхне тата колхозниксен материальнăй пурнăçне лайăхлатассине пысăк сиен кӳреççĕ.

Республикăри колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре малта пыракансен канашлăвне хутшăннисем, партин XIX-мĕш съезчĕ çĕршыври выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекенсем умне кăларса тăратнă задачăсене сӳтсе явса тата пĕр-пĕрин опычĕпе паллашса, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри мĕнпур работниксене, колхоз председателĕсене, ялхуçалăх специалисчĕсене тата МТС-сенчи механизаторсене обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе малалла вăйлатса пырассишĕн, сталинла пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх план тăрăх обществăллă выльăх-чĕрлĕх йышĕпе тухăçлăхне ӳстермелли задание срокчен пурнăçлассишĕн социализмлă ăмăрту сарса яма чĕнсе каларĕç. Вĕсем чĕнсе калани паян «Коммунизм ялавĕ» хаçатра пичетленсе тухать.

— Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли çулталăкри плана мĕнпур йышши выльăх-чĕрлĕх енĕпе те кашни колхозрах Октябрьти Социализмлă Аслă революци 36 çул тултарнă тĕле пурнăçласа çитермелле,—тесе каланă канашлу участникĕсем чĕнсе каланинче. Çак чĕнсе каланинче обществăллă выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне хăпартассишĕн, кашни колхозра выльăх апачĕ çителĕклĕ туса илмелли çирĕп никĕс тăвассишĕн, выльăх-чĕрлĕх çурчĕсем лартассине анлăн сарса ярассишĕн, пĕтĕм обществăллă выльăх-чĕрлĕхе лайăх çуртсене вырнаçтарассишĕн, фермăсенчи ĕçе механизацилессишĕн социализмлă ăмăртса ĕçлемелли условисене палăртнă. Канашлу участникĕсем татăклă социализмлă обязательствăсем йышăннă.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе парти обкомĕн бюровĕ колхозсенчи выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре малта пыракансем пуçарнине ырларĕç тата, вĕсен примерĕ тăрăх, республикăри выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекенсен социализмлă ăмăртăвне уйрăм профессисем тăрăх, урăхла каласан, дояркăсен, пăру пăхакансен, сысна пăхакансен, кайăк-кĕшĕк пăхакансен, сурăх пăхакансен тата конюхсен ăмăртăвне организацилеме йышăнчĕç.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри работниксен социализмлă ăмăртăвĕнче малта пыракансене хисеплĕ ят—республикăри чи лайăх доярка, чи лайăх пăру пăхакан, чи лайăх сысна пăхакан, чи лайăх кайăк-кĕшĕк пăхакан, чи лайăх сурăх пăхакан тата чи лайăх конюх ятне памалла тунă.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС обкомĕн бюровĕ выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри работниксен социализмлă ăмăртăвĕн условийĕсене кăтартса панă.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре малта пыракансен канашлăвĕ чĕнсе каланине тата Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС обком бюровĕ йышăннине выльăх-чĕрлĕх фермисенчи мĕнпур работниксем, МТС-сенчи механизаторсем тата ялхуçалăх специалисчĕсем пурте пĕлсе тăмалла тăвас пулать. Массăллă-политикăллă ĕçе анлăн организацилесе, колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен мĕнпур работниксене, МТС-сенчи механизаторсене, зооветработниксене, ялхуçалăхĕнчи мĕнпур ĕçченсене социализмлă ăмăртăва хутшăнтармалла.

Çак кунсенче выльăх-чĕрлĕхе тĕрĕс-тĕкел хĕл каçарасси, çамрăк выльăхсене пĕтĕмпех сыхласа хăварасси, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекенсене зоотехникăна вĕрентесси çине уйрăммăнах тимлĕн пăхмалла.

Партипе совет тата ялхуçалăх органĕсен ăмăртăва пуçарса тата ертсе пымалла, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре малта пыракансен опытне сармалла.

«Коммунизм ялавĕн» паянхи номерĕнче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре малта пыракансен республикăри канашлăвĕнче тухса каланă хăшпĕр юлташсен сăмахĕсене пичетленĕ. Вĕсем хăйсен ĕçĕнчи опытна паллаштараççĕ. Çавăнпа та вĕсем каласа панипе выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри мĕнпур работниксене паллаштарни усăллă пулĕ.

Обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре социализмлă ăмăртăва анлăн сарса пырар! Çĕнĕ пилĕк çуллăх план тăрăх обществăллă выльăх-чĕрлĕх йышне тата выльăх-чĕрлĕхрен илмелли тупăша ӳстерсе пымалли заданисене срокчен пурнăçлар!

### И. В. Бабушкинăн музей-çурчĕ уçăлни

БАБУШКИН ЯЧĔПЕ ТĂРАКАН ЯЛ (Вологда облаçĕ), январĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Бабушкин районĕнчи ĕçсыннисем хăйсен землякĕ — вырăссен малтанхи рабочи-революционерĕсенчен пĕри Иван Васильевич Бабушкин çуралнăранпа 80 çул çитнине паллă тунă.

Ялти Трудовой урамра, Иван Васильевич пурăннă çуртра, унăн ячĕпе музей уçăлнă. Музей-çуртри икĕ пӳлĕмре вырнаçтарса хунă нумай экспонатсем «Искра» хаçатăн питĕ паллă агенчĕ пулнă революционер пурнăçĕ çинчен каласа параççĕ.

Каçхине культура çуртĕнче И. В. Бабушкина асăнса пуху иртнĕ. Пухăва ĕçсыннисем нумай пухăннă. И. В. Бабушкин пурнăçĕпе революциллĕ ĕçĕсем çинчен райком секретарĕ Ершов юлташ доклад туса панă.

### Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС обкомĕнче

## Республикăри выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçĕн работникĕсем хушшинче социализмлă ăмăрту организацилесси çинчен

Обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре пысăк çитĕнӳсем тăвассишĕн, колхозсенче выльăхсен йышне малалла ӳстерессишĕн тата вĕсен тухăçлăхне хăпартассишĕн республикăри выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçĕн работникĕсем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăрах сарас тĕллевпе Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС обкомĕн бюровĕ çапла йышăнаççĕ:

1. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре малта пыракан колхозниксем ăмăрту пуçарса янине ырлас, вĕсен примерĕ тăрăх республикăри выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçĕн мĕнпур работникĕсем хушшинче профессисем (отраслсем) тăрăх: дояркăсен, пăру пăхакансен, свинаркăсен, кайăк-кĕшĕк пăхакансен, сурăх пăхакансен, конюхсен социализмлă ăмăртăвне организацилес.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçĕн работникĕсем хушшинчи социализмлă ăмăртура мала тухнисене пысăкрах çитĕнӳсем тунăшăн «Республикăри чи лайăх доярка», «Республикăри чи лайăх телятница», «Республикăри чи лайăх свинарка, «Республикăри чи лайăх птичница», «Республикăри чи лайăх овцевод» тата «Республикăри чи лайăх конюх» ятне памалла тăвас.

2. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçĕн работникĕсен социализмлă ăмăртăвĕ валли çакăн пек условисем çирĕплетес:

а) «Республикăри чи лайăх доярка» ятне хăйне çирĕплетсе панă кашни ĕнерен 1.800 килограмран кая мар сĕт тата кашни ĕнерен пăру илнĕ дояркăсене параççĕ;

б) «Республикăри чи лайăх телятница» ятне хăйсене çирĕплетсе панă пăрусене пурне те сыхласа хăварнăшăн, ултă уйăха çитиччен вăхăт хушшинче пăрусене кунне 600 грамран кая мар хутшăнтарса пынă пăру пăхакансене параççĕ;

в) «Республикăри чи лайăх свинарка» ятне çирĕплетсе панă кашни сысна аминчен 16 çураран кая мар çура илнĕ свинаркăсене параççĕ;

г) «Республикăри чи лайăх птичница» ятне çирĕплетсе панă кашни çăмарта тăвакан чăхран 90 çăмартаран кая мар илнĕ çынсене параççĕ;

д) «Республикăри чи лайăх овцевод» ятне çирĕплетсе панă кашни 100 сурăхран 110 путек илнĕ, шултра çăмлă тата çурма-шултра çăмлă кашни сурăхран 3 килограмран кая мар, вĕтĕ çăмлă тата çурма-вĕтĕ çăмлă сурăхран 4,5 килограмран кая мар çăм илнĕшĕн параççĕ;

е) «Республикăри чи лайăх конюх» ятне çирĕплетсе панă 10 кĕсререн 9 тихаран кая мар илнĕ çынсене параççĕ.

3. Республикăри выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçĕн работникĕсем хушшинче пыракан социализмлă ăмăртăвăн итогĕсене çулталăкра икĕ хутчен: июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне тата январĕн 1-мĕшĕ тĕлне тумалла. «Республикăри чи лайăх доярка», «Республикăри чи лайăх телятница», «Республикăри чи лайăх свинарка», «Республикăри чи лайăх птичница», «Республикăри чи лайăх овцевод», тата «Республикăри чи лайăх конюх ятне çулталăк итогĕсем тăрăх райисполкомсемпе КПСС райкомĕсем тăратнипе памалла.

4. Çӳлте асăннă ята илнĕ çынсене Республикăри Хисеп хăми çине кĕртмелле тата Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС обкомĕн Хисеплĕ грамотипе наградăламалла.

5. Республикăри тата районсенчи хаçатсен редакторĕсене социализмлă ăмăртура малта пыракансен—выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре лайăх тĕслĕх кăтартнă çынсен опытне тăтăш çутатма тата анлăн пропагандăлама хушас.

*„Халăхсем хушшинчи мире çирĕплетнĕшĕн“ памалли Тĕнчери Сталинла премисем тĕлĕшпе ĕçлекен Комитетра*

### Бразилири хĕрарăмсен федерацийĕн деятельницине Элиза Бранкона Тĕнчери Сталинла премий пани

Январĕн 15-мĕшĕнче Кремльте, Свердловски залра, «Халăхсем хушшинчи мире çирĕплетнĕшĕн» памалли тĕнчери Сталинла премие Бразилири хĕрарăмсен Федерацийĕн деятельницине Элиза Бранкона панă. Ун чухне залра совет общественноçĕн представителĕсем нумай пулнă.

Тĕнчери Сталинла премие панă чухне Бразилирен халăхсен мире хӳтĕлес тĕлĕшпе пухăннă Конгресне кайнă делегаци пулнă. Делегацие «Халăхсем хушшинчи мире çирĕплетнĕшĕн» паракан тĕнчери Сталинла премий лауреачĕ Жоржи Амаду ертсе пырать. Делегаци халĕ Совет Союзĕнче хăнара пурăнать.

Залра пухăннисем пĕтĕм тĕнчери мир ĕçне хӳтĕлессишĕн пысăк ĕç тăвакан Бразили халăхĕн представителĕсене ăшшăн саламланă.

Элиза Бранкона ылтăн медаль тата тĕнчери Сталинла премий лауреачĕн дипломне панă хыççăн, Комитет председателĕ Д. В. Скобельцын академик çакна палăртнă: тĕнчери демократиллĕ общественность Элиза Бранко тата Бразилири патриотсем Бразилие Корейăри вăрçăна хутшăнтарассине хирĕç хăюллăн кĕрешнине пысăка хурса хакларĕ. Элиза Бранкона премий парса, Комитет тĕнчери демократиллĕ общественноçăн шухăш-кăмăлне палăртнă.

**Константин Симонов** писатель, фашизма хирĕç кĕрешекен совет хĕрарăмĕсен комитечĕн ответлă секретарĕ **Л. И. Петрова**, фашизма хирĕç кĕрешекен совет çамрăкĕсен комитечĕн председателĕн заместителĕ **А. А. Славнов** саламлă сăмахсем тухса каланă. Вĕсем Совет Союзĕнчи обществăллă организацисен ячĕпе лауреата хĕрӳллĕн саламласа сывлăх суннă.

Ф. Э. Дзержинский ячĕпе тăракан «Трехгорная мануфактура» комбинатри рабочисемпе служащисен ячĕпе Элиза Бранкона комбинатри стахановка-ткачиха **Д. П. Смирнова** саламланă.

Çавăн пекех Бразили делегацийĕн членĕ, Бразилипе США хушшинчи çар килĕшĕвне хирĕç кĕрешекен Нациллĕ Комитет председателĕ **Эдгар Буксбаум** генерал сăмах тухса каланă.

Унтан пĕтĕм тĕнчери Сталинла премий лауреачĕ Элиза Бранко сăмах каланă. Ăна пурте пысăк тимлĕхпе итленĕ.

(ТАСС).

### Ленин кунĕсене хатĕрленеççĕ

ЛЕНИНГРАД. В. И. Ленинăн тĕп музейĕн Ленинградри филиалĕнче, музей-хваттерсенче, В. И. Ленинăн пурнăçĕпе тата революциллĕ ĕçĕсемпе çыхăнса тăракан вырăнсенче çак кунсенче çынсем уйрăмах нумай пулаççĕ.

Музей филиалне çĕнĕ экспонатсем илсе пынă. Филиала пыракансем пĕр залра вырнаçтарса лартнă скульптурăна — «В. И. Ленин тата И. В. Сталин Горкăра» ятлă скульптурăна интересленсе пăхаççĕ.

1952 çулта В. И. Ленин музейĕн Ленинградри филиалĕнче, музей-хваттерсенче 700 пин çын ытла пулнă.

УЛЬЯНОВСК. Кунта Ленин кунĕсене хатĕрленме тытăннă. Парти обкомĕ докладчиксем валли «29 çул Ленинсăр, Сталин юлташ ертсе пынипе—Ленин çулĕпе малалла» темăпа лекци иртернĕ.

Клубсенче, культура çурчĕсенче, библиотекăсенче, вулав çурчĕсенче совет халăхĕ коммунизм строительствинче тунă çитĕнӳсене кăтартса паракан выставкăсем хатĕрлеççĕ.

ТАЛЛИН. Паян кунта пропагандистсем валли «29 çул Ленинсăр, Сталин юлташ ертсе пынипе — Ленин çулĕпе малалла» темăпа лекци иртернĕ. Лекцие партин хула комитечĕ организациленĕ.

Эстонири предприятисемпе учрежденисенче, колхозсемпе совхозсенче агитаторсем пиншер çын В. И. Ленинăн пурнăçĕпе революциллĕ ĕçĕсем çинчен каласусем иртереççĕ. Республикăри политикăллă тата наукăллă пĕлӳсем саракан общество членĕсем лекцисем вуласа параççĕ.

* * *

ХУСАН. Хулари предприятисенче, шкулсенче тата агитпунктсенче В. И. Ленинăн пурнăçĕпе революциллĕ ĕçĕ çинчен каласусем иртереççĕ.

Ленин кунĕсене паллă тума Хусанти В. И. Ульянов (Ленин) ячĕпе тăракан государство университетĕнчи студентсем, профессорсемпе преподавательсем тимлĕ хатĕрленеççĕ. Паян студентсемпе наука работникĕсем 300 çын ытла Молотовски районта пурăнакансем хушшинче Ильич çинчен каласусем иртерме тытăннă.

Хулари ĕçсыннисем университета, çамрăк Ильич юридически факультетăн студенчĕ пулнă чухне лекцисем итленĕ пӳлĕме-аудиторие пырса кураççĕ. Аудиторири материалсем В. И. Ленин университетра пулни çинчен, унăн революциллĕ ĕçĕн пуçламăшĕ çинчен кăтартса параççĕ. (ТАСС).

* * *

КУСЛАВККА. В. И. Ленин кунĕсене хатĕрленсе, «Динамо» колхоз клубĕнче каласусем иртереççĕ, В. И. Ленин пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен докладсем тăваççĕ.

Чăваш халăх поэчĕ П. Хузангай çырнă «Горкăри çуртра» поэма тăрăх вулакансен конференцине иртернĕ. Конференцире вулакансем поэмăн пысăк пĕлтерĕшĕ çинчен каларĕç.

В. И. Ленин томĕсене юлашки вăхăтра 50 çын ытла туяннă. Коммунистсемпе пĕрлех партире тăман юлташсем те Ленин произведенийĕсене юратса вĕренеççĕ, вулаççĕ.

И. МИРОНОВ.

## Вырăнти Советсен суйлавĕ умĕн

### Ĕçсыннисем хăйсен чи лайăх представителĕсене район Советне депутата суйлама кандидата тăратаççĕ

ПЕРВОМАЙСКИ. Январĕн 15-мĕшĕнче районти колхозсемпе предприятисенче суйлав умĕнхи пухусем пулса иртрĕç. Çак пухусенче ĕçсыннисен депутачĕсен Первомайски район Советне депутата суйлама кандидатсем тăратасси çинчен сӳтсе яврĕç.

«Пионер» колхоз членĕсен пĕрлехи пухăвĕ район Советне депутата суйлама колхозри паллă дояркăна Клавдия Васильевна Соколова юлташа кандидата тăратрĕ. Вăл 1952 çулта хăйне çирĕплетсе панă 11 ĕнерен вăтам шутпа 1.600-шер литра яхăн сĕт суса илнĕ.

«Сталинград» колхоз членĕсем район Советне депутата суйлама колхозри аслă конюха Василий Макарович Макаров юлташа кандидата тăратрĕç. Ку колхоз лаша ĕрчетмелли плана ирттерсе тултарнă. Макаров юлташ конюх пулса 13 çул хушши ĕçлет, тăрăшса ĕçленĕшĕн кашни çулах премисем илет.

Молотов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем МТС трактор бригадин бригадирне Дмитрий Илларионович Маков юлташа кандидата тăратма йышăнчĕç. Вăл 1931 çултанпа тракторист пулса ĕçлет. Унăн бригади тракторпа тумалли ĕçсен çулталăкри планне иртнĕ çулта ирттерсе тултарчĕ. Вăл ĕçлекен Молотов ячĕпе тăракан тата «Правда» колхозсенче çĕрĕç культури лайăхланса пырать.

Район Советне депутата суйлама тăратнă кандидатсем хушшинче «Красная поляна» колхоз председателĕ Степанов, Шверник ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Тимофеева, «Путь социализма» колхоз председателĕ Кольцов, Аслă Чемен ял Совечĕн председателĕ Семенова, Маленков ячĕпе тăракан колхозри агротехник Горшков, Калинин ячĕпе тăракан колхозри уй-хир бригадирĕ Абрамова юлташсем тата ыттисем те пур.

Колхозсемпе предприятисенчи пухусенче халăхăн чи шанчăклă ывăл-хĕрĕсене, колхозсенчи стахановецсене, партипе совет работникĕсене—пурĕ 29 çынна район Советне депутата суйлама кандидата тăратрĕç.

А. ТУКМАКОВ.

### Пĕр шухăш-кăмăлла пулса

ПĂРАЧКАВ. Ĕçсынни депутачĕсен район Советне депутата суйлама кандидатсем тăратас ĕç районта пысăк çĕкленӳпе пулса иртет.

Киров ячĕпе тăракан промысла артелĕн уяв чухнехи пек илемлетнĕ клубне рабочисемпе служащисем йышлă пухăнчĕç. Пухура чи малтан артель членĕ Пикулина юлташ сăмах илчĕ.

— Совет Союзĕн гражданĕсене пысăк правасем панă,— терĕ вăл,— вĕсем государство влаçĕн органĕсене суйлама та, суйланма та пултараççĕ. Эпĕ артельти рабочисен ячĕпе Пăрачкав район Советне депутата суйлама чи лайăх стахановкăна—Валентина Константиновна Плетнева комсомолкăна кандидата тăратма сĕнетĕп. Вăл ĕç нормине яланах 130—140 процент тултарса пырать, чи лайăх пахалăхлă продукци кăна туса кăларать, обществăллă ĕçе активлă хутшăнать. Вăл эпир шанса панă ĕçе пурнăçлама пултарĕ.

Пикулина юлташăн сĕнĕвне артелĕн пур членĕсем те ырларĕç.

Пăрачкав район больницинчи медицина работникĕсен пухăвĕ пысăк çĕкленӳпе иртрĕ. Врачсемпе сестрасем нумай пулмасть тăрă шыв çине кăларнă çынвĕлерен-врачсен банди преступленийĕ тискер ĕçсем тунă пирки чунтан-чĕререн тарăхнине палăртрĕç. Вĕсем совет халăхĕн пурнăçне лайăхлатассишĕн хăйсен пĕтĕм вăйне тата пĕлĕвне парса ĕçлеме хатĕр пулни çинчен каласа пачĕç. Районти больница работникĕсен коллективĕ, пĕр шухăшлă пулса, район Советне депутата суйлама больницăн главнăй врачне Александр Иванович Золотцев юлташа кандидата тăратрĕç.

Потребкооперации работникĕсем хăйсен пухăвĕнче район Советне депутата суйлама партире тăман Анастасия Петровна Грешнева юлташа—лайăх ĕçлекен продавщицăна, 23 çул хушши культмаг заведующийĕ пулса ĕçлекенскерне, кандидата тăратрĕç. Грешнева юлташ тавар çаврăнăш планне яланах тултарса пырать.

Пăрачкав вăтам шкулĕнчи учительсемпе çамрăк суйлавçăсен пухăвĕнче район Советне депутата суйлама Мария Григорьевна Варакина учительницăна кандидата тăратма йышăннă. Варакина юлташ ачасене вĕрентсе ĕçре 40 çул ытла ĕçлет.

Е. ЧЕРНЫШЕВА.

### Механизаторсен кандидачĕ

ЕТĔРНЕ. МТС-ра ĕçлекенсен пухăвне халăх йышлă пухăнчĕ. МТС главнăй агрономĕ Щетинин юлташ, сăмах илсе, вырăнти Советсен суйлавĕн пĕлтерĕшĕ çинчен каласа пачĕ. Унтан механик Зорников юлташ сăмах илчĕ. Вăл МТС коллективĕнчен район Советне депутата суйлама участокри агронома Вера Михайловна Здорнова юлташа кандидата тăратма сĕнчĕ. Здорнова юлташ колхоз производствинче совет агрономи наукин çитĕнĕвĕсемпе тата малта пыракансен опычĕпе усă курассине анлă сарма тимлĕ тăрăшать. Обществăллă ĕçе активлă хутшăнать.

Здорнова юлташăн кандидатурине ырласа МТС-ри партбюро секретарĕ Куликов юлташ сăмах тухса каларĕ.

Рабочисемпе служащисен пухăвĕ, пĕр шухăшлă пулса, район Советне суйламалли пĕрремĕш суйлав округĕ тăрăх МТС-ри рабочисемпе служащисен коллективĕнчен Вера Михайловна Здорнова юлташа кандидата тăратма йышăнчĕ.

Пухура тата довереннăй пулма, коммунистсемпе партире тăманнисен блокĕн кандидачĕшĕн Здорнова юлташшăн агитацилес[illegible] туса пыма контролер-механик Оглодин юлташа суйларĕç.

В. СЕРГЕЕВ.

РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕНЧИ ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ ĔРЧЕТЕС ĔÇРЕ МАЛТА ПЫРАКАНСЕН КАНАШЛĂВĔ

# МАЛТА ПЫРАКАНСЕН ОПЫТНЕ—РЕСПУБЛИКĂРИ

## *Чăваш АССР-ĕнчи выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри мĕнпур работникĕсене, колхоз председателĕсене, зоотехникĕсене, ветеринари работникĕсене тата МТС механизаторĕсене*

## ЧĔНСЕ КАЛАНИ

Хаклă юлташсем!

Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă гениллĕ ĕçне, вăл Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕн ĕçĕнче каланă сăмахпа тата партин XIX-мĕш съезчĕн историллĕ решенийĕсемпе хавхаланнă совет халăхĕ çĕнĕ пилĕк çуллăх плана срокчен тултарасшăн пĕтĕм вăй хурса ĕçлет, хамăрăн Тăван çĕршывăн пĕтĕм тĕнчери мирĕн шанчăклă тĕрекĕн экономикăллă хăватне вăйлатассишĕн тимлĕ кĕрешет.

Çĕнĕ пилĕкçуллăхра ялхуçалăх ĕçченĕсем умне пысăк та ответлă задачăсем кăларса тăратнă. Ялхуçалăхĕн мĕнпур культурисен тухăçлăхне ÿстерессипе, общественнăй выльăх-чĕрлĕх йышне нумайлатнипе пĕрлех унăн тухăçлăхне чылай ÿстерессипе, ялхуçалăхĕнче малта пыракан техникăпа агрокультурăпа ĕçе кĕртнĕ пилĕс çинче колхозсен общественнăй хуçалăхне малалла тĕреклетсе тата аталантарса пырса, совхозсене МТС-сен ĕçне лайăхлатса, çĕрĕçĕн тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçĕн пĕтĕм продукцине тата таварлă продукцине ÿстерессипе ялхуçалăх енĕпе малашне те тĕп задача пулса тăрать, тенĕ партин XIX-мĕш съезчĕ ССР Союзне 1951—1955 çулсенче аталантармалли пилĕкмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе панă директивăсенче.

Выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем енĕпе халăхăн ÿссе пыракан ыйтăвĕсене тивĕçтерес тата çăмăл промышленность чĕртавар ыйтнине тивĕçтерес шутпа, пирĕн колхозсемпе совхозсенче выльăх-чĕрлĕх пăхас ĕçре ĕçлекенсен, пилĕкçуллăхра выльăх-чĕрлĕх йышне çакăн чухлĕ ÿстермелле: колхозсенче майракаллă шултра выльăх йышне 36—38 процент, çав шутра ĕнесен йышне 2 хута яхăн, сурăхсен йышне 75—80 процент, сысна йышне 85—90 процент, кайăк-кĕшĕк йышне 3—3,5 хут, лашасен йышне 14—16 процент ÿстермелле. Общественнăй выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе пысăк задачăсем кăларса тăратнă.

«Çак задачăна ăнăçлăн татса памă, — тенĕ Маленков юлташ партин XIX-мĕш съездĕнче Центральнăй Комитет ĕçĕсем çинчен тунă отчетлă докладра, — чи малтан, пур колхозсемпе совхозсенче те выльăх апачĕн çирĕп никĕсне туса хумалла, выльăх-чĕрлĕх валли лайăх карта-витесем туса памалла, çавăн пекех выльăх-чĕрлĕхе пăхас ĕçе анлăн механизацилемелле. Пысăк тухăçлă, нумай тавар тата тупăш паракан выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелле. Колхозсемпе совхозсенче выльăх-чĕрлĕх пахалăхне лайăхлатас ĕçе вăйлатмалла, хальхи вăхăтра пур пек ăратлă выльăх-чĕрлĕх йышне хăвăрт ÿстермелле, ялхуçалăхĕнче пысăк тухăçлă çĕнĕ ăратлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелле. Выльăх-чĕрлĕх йышне ÿстерес пилĕ вăхăтрах, вĕсен пахалăхне лайăхлатса, тухăçлăхне хăпартса пырсан тин выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре тивĕçлĕ çитĕнÿ тума пулать».

Çĕршыври тата пирĕн республикăри малта пыракан колхозсен опычĕнчен пирĕн патăмăрта çак задачăсене ăнăçлă пурнăçлама пур условисем те пурри курăнса тăрать. Республикăри малта пыракан колхозсем: Етĕрне районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан, Чкаловски районĕнчи «Гвардеец», Улатăр районĕнчи «Путь Ильича», «Победа» колхозсем, Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз, Шупашкар районĕнчи «Красный Флот», Канаш районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан, Пĕнерес районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан, Муркаш районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозсем тата общественнăй выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессишĕн ялан хытă тăрăшакан ытти хăшпĕр колхозсем фермăсенче пысăк тухăçлă выльăхсем нумай усраççĕ, общественнăй выльăх-чĕрлĕхрен çултан çул пысăк тухăçлă продукци тата укçан пысăк тупăш илсе тăраççĕ. Буденный ячĕпе тăракан колхозра 1952 çулта кашни ĕнерен 2.233 литр сĕт суса илнĕ, кашни сурăхран 4,65 килограмм çăм касса илнĕ. Колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре 1951 çулта укçан 314 пин тенкĕ, 1952 çулта 351 пин тенкĕ таран тупăш илнĕ.

Муркаш районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетнипе 1952 çулта 391 пин тенкĕ тупăш илнĕ.

Фермăсенче тÿрĕ кăмăлпа ĕçлесе, наука çитĕнĕвĕсемпе тата колхозсенчи новаторсен малта пыракан опычĕпе усă курса, пирĕн нумай дояркăсем, пăру пăхакансем, сурăх, сысна тата кайăк-кĕшĕк фермисенчи работникĕсем иртнĕ çулта выльăх-чĕрлĕх продукцийĕ çĕнĕ пилĕк çуллăх планра палăртнă тăрăх 1955 çул вĕçĕнче пулмалли хисепрен те чылай ытларах продукци туса илчĕç. Çапла, Етĕрне районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхозра доярка А. С. Селиванова иртнĕ çулта хăйне çирĕплетсе панă кашни ĕнерен 2.409 литр, Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозри доярка Е. А. Ситухина кашни ĕнерен 2.395 литр, Пăрачкав районĕнчи М. Горький ячĕпе тăракан колхозра доярка А. Г. Каулина кашни ĕнерен 2.307 литр сĕт суса илнĕ. Çĕрпÿри государство селекци станцийĕнчи тата Улатăрти махорка совхозĕнчи дояркăсем сĕт тухăçлăхне тата ытларах ÿстерме пултарнă. Сăмахран, Çĕрпÿри государство селекци станцийĕнчи О. М. Митрофанова хăйне çирĕплетсе панă кашни ĕнерен 4.705 литр, А. Е. Ефимова доярка — 4.200 литр, Улатăрти махорка совхозĕнчи доярка Т. С. Рыбакова кашни ĕнерен 2.600 литр сĕт суса илнĕ.

Çамрăк выльăхсене йышăнса илес, сыхласа усрас тата пăхса ÿстерес ĕçре те пирĕн нумай работникĕсем пахa тĕслĕх кăтартаççĕ. Пăрачкав районĕнчи «Новый путь» колхозри пăру пăхакан М. Васькина юлташ иртнĕ çулта 27 ĕнерен 27 пăру илсе пăхса ÿстернĕ; Комсомольски районĕнчи «Красная звезда» колхозри свинарка Р. Н. Шурбина кашни сысна аминчен вăтам шутпа ÿстерме ирăллă 24 çура, Çĕмĕрле районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхозри свинарка М. С. Кудрова кашни сысна аминчен 22 çура, Куславкка районĕнчи «Победа» колхозри свинарка А. И. Деманова кашни сысна аминчен 19 çура илнĕ. Тăвай районĕнчи «25-ое Октября» колхозри свинарка А. И. Козелкова, Октябрьски районĕнчи «Звезда» колхозри свинарка Т. Я. Краснова, Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Чапаев ячĕпе тăракан колхозри свинарка А. Ф. Кудряшова, Элĕк районĕнчи «Правда» колхозри свинарка М. А. Арсентьева, Улатăрти махорка совхозĕн сысна фермин бригадирĕ А. И. Зацепилин тата ыттисем те кашни сысна аминчен ÿстерме ирăллă 15—18-шар çура илнĕ.

Пирĕн республикăри колхозсенче пысăк тухăçлă сурăх ĕрчетекен мастерсем те пур. Сăмахран, Етĕрне районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхозри сурăх пăхакан Н. М. Крынецкий кашни 100 сурăхран 142-шер путек илсе ÿстернĕ, вăтам шутпа кашни сурăхран 4,65 килограмм çăм касса илнĕ, Канаш районĕнчи Куйбышев ячĕпе тăракан колхозри сурăх пăхакан В. С. Семенов юлташ 190 сурăхран вăтам шутпа кашниинчен 4,11 килограмм çăм, Канаш районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри сурăх пăхакан М. А. Портнова кашни 100 сурăхран вăтам шутпа 135 путек илсе ÿстернĕ, кашни сурăхран 4 килограмм çăм касса илнĕ.

Чурачăк районĕнчи «Путь Сталина» колхозри, Шупашкар районĕнчи «Красный флот», Калинино районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхозсенчи кайăк-кĕшĕк пăхакансем хăйсен ĕçĕнче пысăк çитĕнÿсем тунă. Çапла, Чурачăк районĕнчи «Путь Сталина» колхозри кайăк-кĕшĕк пăхакан Е. Р. Родионова çăмарта тăвакан кашни чăхран 150-шар çăмарта илнĕ.

Республикăра кашни кĕсререн тиха илсе ÿстерекен колхозсем те сахал мар.

Çак тĕслĕхсем ĕнтĕ партин çĕнĕ пилĕкçуллăхра общественнăй выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе малалла аталантарса пырас тĕлĕшпе лартнă задачăсене ăнăçлă пурнăçлама пирĕн пур условисем те пурри çинчен калаççĕ.

Анчах пирĕн республикăри нумай колхозсенче общественнăй выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессишĕн чăн-чăн хуçалла тăрăшни çук-ха, выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне хăпартас ĕç çине тимлĕ пăхмаççĕ, выльăхсем вилнисем пулаççĕ, çапла вара государствăна, колхозсен общественнăй тухăçлăхне, колхозниксен пурнăçне лайăхлатас ĕçе сиен кÿреççĕ. Ку ĕç çавăн пек пулса пынине пĕлĕшме çуккине кашнин лайăх ăнланса илсе пулать.

Эпир, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре ĕçлекенсен республикăри канашлăвне пуханнисем, партин XIX-мĕш съезчĕ çĕршыври выльăх-чĕрлĕх работникĕсем умне лартнă задачăсем çинчен сÿтсе явса, сире, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре ĕçлекен юлташсем, колхоз председателĕсем, ялхуçалăх специалисчĕсем тата МТС механизаторĕсем общественнăй выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе малалла вăйлатассишĕн социализмлă ăмăртăва анлă сарма тата 1953 çулта республикăра çакăн пек çитĕнÿсем тăвассишĕн тăрăшма чĕнетпĕр:

1. Общественнăй выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли çулталăк планне пур выльăхсем енĕпе те кашни колхоз Октябрьти Социализмлă Аслă революци 36 çул тултарнă тĕле пурнăçламалла.

2. Кашни 100 кĕсререн 60 тихаран кая мар, кашни 100 ĕнерен 90 пăруран кая мар, кашни 100 сурăхран 110 путекрен кая мар, кашни сысна аминчен 14 çуραран кая мар илмелле. Çамрăк выльăхсене пĕтĕмпех сыхласа усрамалла.

3. Кашни ĕнерен 1.400 литртан кая мар сĕт суса илмелле, кашни ÿссе çитнĕ сурăхран 3-шер килограмм çăм, çăмарта тăвакан кашни чăхран 80-шар çăмарта илмелле. Ĕнесен тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе сăвакан ĕнесене çулталăкĕпех апат çинче тăратас ĕçе организацилемелле.

4. Кашни колхозра выльăх апачĕн çирĕп никĕсне хывмалла, çав шутпа нумай çул тата пĕр çул ÿсекен курăксем, тымар çимĕçсем, силос тата пахча культурисем акса тăвакан лаптăка пысăклатмалла, вĕсен тухăçлăхне ÿстермелле, çарансемпе кĕтÿ çÿретмелли вырăнсене лайăхлатмалла. Нумай çул ÿсекен курăксем кашни гектартан вăтам шутпа 30 центнертан кая мар, пĕр çул ÿсекен курăксем анлă кашни гектартан 35 центнертан кая мар, кашни гектар çаран çинчен 22 центнертан кая мар утă çулса илмелле, выльăх апачĕллĕ тымар çимĕçсен гектар çинчен 300 центнертан кая мар, силос культурисен 250 центнертан кая мар туса илмелле.

Кашни колхозра выльăх апачĕ хатĕрлекен бригадăсем тумалла. Утă пухса кĕртес тата силос хывас ĕçсене организованно ирттермелле. Уй-хир ĕçĕсем пуçланиччен силос хывмалли плана 80 процентран кая мар тултармалла. Выльăх апачĕне тĕрĕс тата перекетлĕ усă курмалла.

5. Пур колхозсенче те выльăх-чĕрлĕх витй-картисене тăвас ĕçе организацилемелле. Кăçал пĕтĕм выльăха лайăх витесене куçармалла. Вăл витесем фермăсенчи йывăр ĕçсене механизацилеме ирăллă пулмалла.

6. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри йывăр ĕçсене, уйрăмах апат хатĕрлес, шыв тăратас ĕçсене механизацилемелле, кормокухнисемпе выльăхсене шăвармалли вырăнсене йĕркелемелле.

7. Государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем тăратмалли çулталăкри плана кашни колхозăн ноябрĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр тултармалла. Государствăна аш-какай памалли плана самăртнă выльăхпа кăна тултармалла, çавăнпа та майраллăй шултăра выльăхсене, сыснасене самăртма тăратмалла.

Общественнăй выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе малалла вăйлатассишĕн, общественнăй выльăх-чĕрлĕх йышĕпе унăн тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе çĕнĕ пилĕк çуллăх план заданийĕсене срокчен тултарассишĕн социализмлă ăмăртăва хутшăнса, эпир кашни çакăн пек обязательствăсем йышăнатпăр:

**О. М. Митрофанова** (Çĕрпÿри государство селекци станцийĕнчи доярка) кашни ĕнерен 5.000 литртан кая мар сĕт суса илме;

**А. Е. Ефимова** (Çĕрпÿри государство селекци станцийĕнчи доярка) кашни ĕнерен 4.500 литртан кая мар сĕт суса илме;

**Т. С. Рыбакова** (Улатăрти махорка совхозĕнчи доярка) кашни ĕнерен 3.200 литртан кая мар сĕт суса илме;

**А. С. Селиванова** (Етĕрне районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхозри доярка) кашни ĕнерен пĕрер пăру илсе пăхса ÿстерме тата кашни ĕнерен 3.000 литртан кая мар сĕт суса илме;

**А. И. Леднева** (Пăрачкав районĕнчи Максим Горький ячĕпе тăракан колхозри доярка), **П. В. Заплаткина** (Чкаловски районĕнчи «Гвардеец» колхозри доярка), **М. Н. Маркина** (Улатăр районĕнчи «Путь Ильича» колхозри доярка), **А. Г. Каулина** (Пăрачкав районĕнчи Максим Горький ячĕпе тăракан колхозри доярка) кашни ĕнерен 2.500-шер литр сĕт суса илме;

**У. В. Галкина** (Вăрнар районĕнчи Хрущев ячĕпе тăракан колхозри доярка), **М. А. Тайрукова** (Шăмăршă районĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхозри доярка), **Н. Я. Яковлева** (Пĕнерес районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозри доярка) кашни ĕнерен 2.000-шер литр сĕт суса илме;

**С. И. Ильина** (Красноармейски районĕнчи «Коминтерн» колхозри доярка), **Е. А. Андреева** (Красноармейски районĕнчи «Красное Сормово» колхозри доярка), **Н. А. Козлов** (Комсомольски районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхозри ферма заведующийĕ) кашни ĕнерен 1.800-шер литр сĕт суса илме;

**В. А. Андреева** (Советски районĕнчи Карл Маркс ячĕпе тăракан колхозри пăру пăхакан) хăйне çирĕплетсе панă пăрусене пурне те сыхласа усрама, вĕсене кашни талăкра вăтам шутпа 600 грамран кая мар хушăнтарса пыма;

**Р. Н. Шурбина** (Комсомольски районĕнчи «Красная звезда» колхозри свинарка) хăйне çирĕплетсе панă кашни сысна аминчен 25 çураран кая мар илсе ÿстерме;

**А. В. Чермилин** (Çĕмĕрле районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхоз фермин заведующийĕ) кашни сысна аминчен 22 çураран кая мар тата акмалли çĕрĕн кашни 100 гектарĕ пуçне сысна ашĕ пин килограмм туса илме;

**Т. Я. Краснова** (Октябрьски районĕнчи «Звезда» колхозри свинарка) хăйне çирĕплетсе панă кашни сысна аминчен 21 çура илсе ÿстерме;

**А. М. Деманова** (Куславкка районĕнчи «Победа» колхозри свинарка) кашни сысна аминчен 20 çураран кая мар илсе ÿстерме;

**Н. В. Васильева** (Красноармейски районĕнчи «Пятилетка» колхозри свинарка) кашни сысна аминчен 18 çураран кая мар илсе ÿстерме;

**А. И. Зацепилин** (Улатăрти махорка совхозĕнчи сысна фермин бригадирĕ) кашни сысна аминчен вăтам шутпа 18 çураран кая мар илме;

**М. А. Портнова** (Канаш районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри сурăх фермин заведующийĕ) вĕтĕ çăмлă кашни сурăхран вăтам шутпа 4,5 килограмран кая мар çăм касса илме тата кашни 100 сурăхран 130 путекрен кая мар илсе ÿстерме;

**Н. М. Крынецкий** (Етĕрне районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхозри сурăх пăхакан) вĕтĕ çăмлă кашни сурăхран вăтам шутпа 5 килограмран кая мар çăм касса илме тата кашни 100 сурăхран 150 путекрен кая мар илсе ÿстерме;

**В. Н. Григорьева** (Шупашкар районĕнчи «Красный флот» колхозри кайăк-кĕшĕк пăхакан) çăмарта тăвакан кашни чăхран 100-шар çăмарта пухса илме;

**А. В. Донгова** (Етĕрне районĕнчи участокри зоотехник) хăйĕн участокĕнчи кашни колхоз 1953 çулта общественнăй выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне пур йышши выльăхсем енĕпе те пĕтĕмпех тултармалла тăвассишĕн кĕрешме пулать. Участокра кашни 100 кĕсререн 60 тихаран кая мар, кашни 100 ĕнерен 100 пăруран кая мар, кашни 100 сысна аминчен 1.500 çураран кая мар, кашни 100 сурăхран 120 путекрен кая мар илесине пурнăçа кĕртме пулать. Çамрăк выльăхсене пурне те сыхласа усрамалла. Участокри кашни ĕнерен 1.800 литртан кая мар сĕт суса илмелле, кашни ÿссе çитнĕ сурăхран 3,5 килограмм çăм, кашни çăмарта тăвакан чăхран 90 çăмартаран кая мар илмелле. Инкубатор станцийĕнче тунинă чĕпсене 85 процентран кая мар сыхласа усрамалла тата пăхса ÿстермелле.

**А. П. Козлов** (Пăрачкав районĕнчи участокри зоотехник) хăйĕн участокĕнчи кашни колхозра общественнăй выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне пур йышши выльăхсем тата кайăк-кĕшĕк енĕпе те пĕтĕмпех тултарассине пурнăçа кĕртме пулать. Кашни 100 кĕсререн 70 тихаран кая мар, кашни 100 ĕнерен 95 пăруран кая мар, кашни 100 сысна аминчен 1.600 çураран кая мар, кашни 100 сурăхран 110 путекрен кая мар илмелле. Çамрăк выльăхсене пурне те сыхласа усрамалла. Участокри кашни ĕнерен 1.800 литртан кая мар сĕт суса илмелле, кашни ÿссе çитнĕ сурăхран 3,5 килограмран кая мар çăм касса илмелле, çăмарта тăвакан кашни чăхран 90 çăмартаран кая мар илмелле. Кашни пăру вăтам шутпа талăкра 650 грамран кая мар хушăнса пымалла, акакан çĕрĕн кашни 100 гектарĕ пуçне сысна ашĕ 900 килограмран кая мар туса илмелле. 1953 çулта пур колхозсенче те выльăх-чĕрлĕх усрамалли çуртсене вырăнти строительство материалĕсенчен—самантан тăвас ĕçе пурнăçа кĕртмелле.

Йышăннă социализмлă обязательствăсене ăнăçлăн пурнăçласси выльăх-чĕрлĕхе хĕл лайăх каçарнинчен килет. Выльăхсене лайăх хĕл каçарни выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе малалла вăйлатса пымалли чи кирлĕ условипулса тăрать.

Халĕ, çак кунсенче, пирĕн мĕнпур выльăхсене, уйрăмах çамрăк выльăхсене пур майсемпе те сыхласа хăварма тăрăшмалла. Çак задачăна эпир татса пама пултаратпăр. Çакна тума выльăхсене пăхас тата апат парас ĕçе лайăхлатни кирлĕ. Выльăх апачĕне тĕрĕс, тирпейлĕ усă курмалла, ăна выльăхсене парас умĕн тураса вĕтетмелле, пăслантармалла, йÿçĕтмелле. Çак ĕçре машина-трактор станцисем пысăк вырăн йышăнса тăмалла.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри пирĕн çитĕнÿсем ĕçе тĕрĕс организациленинчен тата ĕçшĕн тĕрĕс тÿленинчен, выльăхсем пăхас ĕçре обезличкăна, кадрсем улшăнса тăнине, ĕçшĕн тÿлес ĕçри уравниловкăна пĕтерпинчен килеççĕ. Выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлекен работниксене ялан пĕрентес ĕçе организацилемелле.

Юлташсем, выльăх-чĕрлĕх пăхакан работниксем, колхоз председателĕсем, зоотехниксемпе ветеринари работникĕсем, МТС механизаторĕсем! Общественнăй выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе малалла вăйлатса пырассишĕн, общественнăй выльăх-чĕрлĕх йышне нумайлатас тата унăн тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе сталинла çĕнĕ пилĕкçуллăхра палăртнă заданисене срокчен тултарассишĕн социализмла ăмăртăва анлă сарар! Общественнăй выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе колхоз производствин пысăк тухăçлă, тавар тата тупăш нумай паракан отраслĕ туса хурар! Тăван çĕршыва аш-какай, çăвă, сĕт, çăмарта нумайрах парар, çăмăл промышленноçа чĕртавар çителĕклĕ парса тăрар! Совет çыннисен—коммунизм обществи тăвакансен пурнăçне лайăхлатассишĕн тата культурăллă шайне ÿстерессишĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешер!

Сывă пултăр пирĕн социализмлă Тăван çĕршыв—пĕтĕм тĕнчери мирĕн шанчăклă тĕрекĕ!

Сывă пултăр Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ—пирĕн мĕнпур çĕнтерÿсен хавхалантаракан̆ĕ тата организаторĕ!

Сывă пултăр аслă çулпуçăмăрпа учителĕмĕр, пирĕн хаклă та юратнă Иосиф Виссарионович Сталин!

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре малта пыракансен республикăри канашлăвĕнче сÿтсе явса йышăннă.

## Кашни амаран 25 çура

**Комсомольски районĕнчи «Красная звезда» колхозра ĕçлекен свинарка Р. Н. Шурбина каланă сăмахран.**

Пирĕн колхоз тăватă ферма тытать. Сысна ферми пуриччен те лайăх ĕçлет.

1952 çулта эпир пысăк çитĕнÿсем турăмăр. Фермăри кашни сысна аминчен вăтам шутпа 16-шар çура илсе ÿстертĕмĕр. Пĕр çура та чирлемен, вилмен. Çавна май сысна ĕрчетмелли плана ирттерсе тултартăмăр. План тăрăх фермăра 330 сысна пулмалла, халĕ 484 пуç усратпăр.

Пирĕн сысна фермин çуласерехех колхоза пысăк тупăш парать. 1952 çулта çав тупăш 200 пин тенкĕрен те иртет.

Çак çитĕнÿсене эпир мĕнле майпа тума пултартăмăр? Тÿрех калатăп, пирĕн колхозра общественнăй выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатассишĕн кашни колхозник тăрăшать. Пире, ферма работникĕсене, тухăçлă ĕçлеме колхоз правленийĕ парторганизаци пулăшнипе пысăк пулăшу параççĕ.

Сыснасене çĕнĕ те стандартлă витесенче усратпăр. Фермăра выльăх апачĕ хатĕрлемелли кухньăсем пур, вĕсенче икĕ кормозапарник, çĕрулмипе тымарçимĕç çумалли, турамалли, тĕштырăсене вĕтетмелли машинăсем вырнаçтарнă. Фермăна шыв парса тăрас ĕçе механизациленĕ. Выльăх апачĕ çителĕклĕ: сыснасем валли çĕрулми, кăшман, силос, кишĕр, типĕтнĕ вĕтĕрен, люцерна утти тата пăрçа-испăн ăрипсем пур. Тĕштыра кирлĕ чухлĕ уйăрса панă. Фермăра ĕçлекенсем пурте зоотехника курсĕнче вĕренеççĕ.

1952 çулта эпĕ кашни сысна аминчен 24-шар çура пăхса ÿстертĕм. Çак çитĕнĕве тăвас тесе, сыснасене пăхса усрас ĕçре зоотехникпа ветеринари правилисене тимлĕн пурнăçласа пытăм. Сысна амисене пурне те вăхăтра ăратлă асçамсемпе чуптарса хăвартăм, пĕтĕ вăхăтра вĕсене уйрăмах лайăх пăхса усрарăм. Çавăнпа та кашни сысна ами иккĕшер хут çурларĕ, пысăк та çирĕп çурасем туса пачĕ.

Пирĕн опыт çакна кăтартса парать: сысна ĕрчетес ĕçре вĕсене тĕрĕс тăрантарасси пысăк вырăн йышăнать. Çавăнпа та эпĕ сыснасене зоотехника вĕрентнĕ пек тăрантарса усратăп. Сысна амисене кунне виçĕ хутран кая мар апат паратăп. Вĕсен хĕллехи рационне вăтам шутпа çак апатсем кĕреççĕ: çĕрулмипе кăшман—12 килограмм, силос—3 килограмм, люцерна е пăрçа-испăн—2 килограмм тата 3 килограмм посыпка. Кусемсĕр пуçне, сыснасене ялан минераллă апатсем — пурă, йывăç кăмрăкĕ тата тăвар паратăп, ăшă шывпа шăваратăп. Лайăх çанталăкра вĕсене картишне кăларса кашни кун 3—4 сехет хушши уçăлтарса çÿрететĕп.

Аçта тасалăх — унта чир çук. Çавна асра тытса эпĕ витери тислĕке кунне икĕ-виçĕ хут тасатса тăратăп, сыснасем айне таса та типĕ улăм саратăп. Кунсăр пуçне сыснасене кашни кун щеткăпа тасататăп, çуллахи вăхăтра шыва кĕртетĕп.

Çамрăк çурасене йышăнса илме эпир лайăх хатĕрленетпĕр. Пĕтĕ сысна амисене çурлас умĕн вунă кун малтан уйрăм пÿлĕме куçаратпăр. Вĕсем çурланă вăхăтра вара витере талăкĕпех хурал тăратпăр. Лайăх йышăнса илнĕ çамрăк çурасене кашни сехет е сехет те çурă иртсен амăшĕ патне ярса ĕмĕртетпĕр. Виççĕмĕш кунне вĕсене шыв ĕçме вĕрентетĕп, минераллă апатсем паратăп. 7—8 куна çитнĕ çурасене ăшаланă пăрçа е тулă паратăп. Вĕсем валли пăтă та, кĕсел те пĕçеретĕп. Сысна ами сĕт сахал антарать пулсан, унăн çурисене ĕне сĕчĕ ĕçтеретĕп. Çу кунĕсенче сыснасене кĕтÿре çÿретес ĕçе те эпир лайăх йĕркелетпĕр. Иртнĕ çул сысна çурисем валли хăймасăр сĕт те, тăпăрч шывĕ те çителĕклĕ пулчĕ. Тăрăшса ĕçленипе икĕ уйăхри çурасен черĕ виçине вăтам шутпа 18 килограма çитертĕмĕр.

Пирĕн фермăра ĕçе сдельщина тăрăх организациленĕ. Ĕçне кура—тупăшĕ. Иртнĕ çул эпĕ пурĕ 598 ĕçкунĕ турăм, ĕçкунĕсем çине 90 пăт тырă тата 500 тенкĕ укçа илтĕм. Лайăх ĕçленĕшĕн колхоз правленийĕ 7 сысна çури пачĕ.

Пирĕн пурнăç кулленех лайăхланса пырать. Малашне татах та хастарлăрах ĕçлес килет. Манăн ĕмĕт—çĕнĕ çулта кашни сысна аминчен 25-шер çура илсе ÿстересси. Халĕ эпĕ илнĕ обязательствăна чыслăн пурнăçлассишĕн кĕрешетĕп.

## Сурăхсем пăхас ĕçри манăн опыт

**Канаш районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри сурăх фермин заведующийĕ М. А. Портнова юлташ каласа панинчен.**

1952 çулта пирĕн колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пур выльăхсем енĕпе те ирттерсе тултарчĕ.

Выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхĕ чылай ÿсрĕ. Кашни ĕнерен 1.600 килограмм сĕт суса илнĕ. Урăхла каласан, ку вăл унчченхи çулхинчен кашни ĕнерен 980 килограмм нумайрах суса илнине пĕлтерет.

Колхоз государствăна обязательнăй пĕрене продукци тăратмалли обязательствăсене пĕтĕмпех пурнăçларĕ. Государствăна планран ирттерсе панă сĕтшĕн колхоз кăçал автомашинă тата кантăр вăрри чуста нумай илчĕ.

Эпĕ 1951 çултанпа сурăх фермин заведующийĕ пулса ĕçлетĕп.

Çулталăк пуçламăшĕнче фермăра пурĕ 347 пуç сурăх пулнă. Хальхи вăхăтра фермăра 540 пуç сурăх шутланать. Çулталăк хушшинче вĕсен йышĕ 55 процент ÿснĕ. Çакна ăна эпир путексене лайăх пăхса ÿстернипе турăмăр. 1952 çулта кашни çĕр сурăх пуçне 129 путек пăхса ÿстертĕмĕр.

Пирĕн сурăхсен 60 проценчĕ вĕтĕ тата çурма вĕтĕ çăмлисем. Халĕ эпир пурне те вĕтĕ çăмлă тăвас тĕллев лартрăмăр. Ку тĕлĕшпе эпир малалла ĕрчетме вĕтĕ çăмлă путексем кăна уйăрса хăваратпăр.

Пирĕн ĕçре чи ответлă тапхăрсенчен пĕри вăл—сурăхсене чуптарасси пулать. Çавăнпа та çак ĕç çине питĕ тимлĕ пăхатпăр. Сурăхсене чуптармашкăн 2—3 уйăх маларах хатĕрленетпĕр. Ку тĕлĕшпе вĕсене кĕтÿре çÿрететпĕр. Анчах пирĕн колхозра кĕтÿ çÿретмелли вырăнсем сахал. Çавăнпа та сурăхсене хушса çитеретпĕр, кунне 300 грамм концентрат паратпăр.

Пĕтĕм сурăхсене хĕллехи вăхăтра лайăх тăрантаратпăр. Вĕсене лайăх силос, сĕм улăмĕ, утă тата 300—500-шер грамм тырă паратпăр.

Хальхи вăхăтра сурăхсем путексем тума тытăннă. Эпĕ шанатăп, кăçал татах та нумайрах путексем илетпĕр. Хĕле кăмăлĕ лайăх хатĕрлентĕмĕр. Пур сурăхсем валли те ăшă çуртсем хатĕрлерĕмĕр. Хатĕрлесе кунă выльăх апатне пĕтĕмпех фермăсем патне турттарса пынă. Çамрăк выльăхсем валли витаминлă лайăх утă тата 200 кав çулçăллă апат хатĕрленĕ.

Хĕллехи вăхăтра фермăри ĕçе ирхине 5 сехетре тытăнатпăр: ĕçсене пурне те пĕрре йышăннă йĕркепе тăватпăр.

Хĕллехи вăхăтра сурăхсене сутри улăмĕ, çулçăллă апат, силос, чĕкĕнтĕр, çĕрулми, тăвар тата посыпка паратпăр. Утă-улăм панă хыççăн, кашни кун виçĕ хутчен ăшă шыв паратпăр.

Эпир сурăх витисене дезинфекци тăватпăр. Пăрамламалли çуртсене лайăх йĕркелетпĕр, урайне улăм нумай саратпăр. Выльăхсене план тăрăх чуптарнă май, эпĕ вĕсем хăçан пăрамламаллине малтанах пĕлсе тăратăп. Çуралсанах путек сăмсине тутине çуса тасататпăр, кăвапине касатпăр, иодпа дезинфекци тăватпăр. Çавăн хыççăн вара путеке амăшне çуллама паратпăр, амăшĕн сĕчĕ вăхăтра тухнине сăнатпăр. Халлĕхе пирĕн колхозра путексене амăшĕсемпе хăварма условисем çук-ха. Анчах та пĕр вăхăтра çуралнисене 10—15-шер путеке пĕр ушкăна пухатпăр. Путексене ĕмĕртнĕ чухне амăшĕсене хăш ушкăна тăратмаллине пĕлес пулать. Çапла тусан путексем хăйсен амăшĕсене хăвăрт тупаççĕ, чĕчĕ лайăх ĕмеççĕ.

Путексене тĕрĕс-тĕкел пăхса усрасси йывăр ĕç. Сурăх путеке йышăнмасть пулсан, ăна амăшĕ çумĕнче хăнăхса çитиччене усратăп.

12 кун иртнĕ хыççăн путексене лайăх утă, уйăх иртсен сĕлĕ пама тытăнатăп. Кормушкăсенче яланах тăвар, пурă тата шăмă çăнăхĕ тытатпăр. Хĕвеллĕ кунсенче путексене уçăлса çÿреме кăларатпăр, малтанхи кунсенче 10—15-шер минут, каярахпа 2—3 сехет таран çÿрететпĕр.

Путексене амăшĕ çумĕнчен 4 уйăх çурăра е 5 уйăх иртсен тин уйăратпăр. Малтан амăшĕнчен тĕреклĕрех те пысăкрах путексене, каярахпа вара ыттисене те уйăратпăр.

1952 çулта пирĕн колхоз сурăх çăмне электричествăпа касмалли аппаратсем туянчĕ. Электричество вăйĕпе касни кашни сурăхран 150—200-шер грамм ытларах çăм илме май парать. Çавăнпа пĕрлех ĕç тухăçлăхне чылай ÿстерет.

Сурăх пăхакан колхозниксене эпир ĕçкунĕсем çăм касса илнĕ тăрăх тата путексене тĕрĕс-тĕкел пăхса ÿстернĕ тăрăх тÿлетпĕр. Иртнĕ çулта сурăх пăхакансене хушса тÿлемелли йĕркепе 23 путек тата 23 килограмм çăм валеççе панă.

1953 çулта эпир тата пысăкрах обязательствăсем илтĕмĕр. Кашни çĕр сурăхран 130 путек, 4,5-шер килограмм çăм касса илме пултăмăр.

РЕСПУБЛИКАРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ ĔРЧЕТЕС ĔÇРЕ МАЛТА ПЫРАКАНСЕН КАНАШЛАВĔ

# ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ ФЕРМИСЕНЧИ МĔНПУР РАБОТНИКСЕНЕ

## 5.000 килограмм сĕт

**Сĕрпÿ селекци станцийĕнчи ĕне фермине ĕçлекен доярка О. М. Митрофанова каланă сăмахран**

Кашни ĕнерен 3.671 килограмм сĕт. Çакăн пек итогпа вĕçленĕ 1951 çула эпир, Сĕрпÿри селекци станцийĕн ĕне фермине ĕçлекенсем.

Пирĕн сĕршыври ĕçсыннисем тунă ÿсĕмсемпе нихçан та лăпланса лармаççĕ. 1952 çулта эпир выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне татах та ытларах ÿстерме пултăмăр. Эпĕ хам пăхакан кашни ĕнерен 4.500 килограмран кая мар сĕт суса илме сăмах патăм. Нумаях та вăхăт иртмерĕ, Чăваш республикинчи тата Мордва АССР-ĕнчи ялхуçалăх работникĕсем ăмăртса ĕçлеме тытăнчĕç. Эпĕ Мордва республикинчи Желябов ячĕпе тăракан совхозри Клавдия Максимова дояркăпа социализмлă договор турăм.

Хамăн обязательствăна тÿррĕн пурнăçларăм: 1952 çулта 10 ĕнерен кашнинчен вăтам шутпа 4.705 килограмм, пурĕ 47 тонна ытла сĕт суса илтĕм. Хĕрĕх çичĕ тонна! Çавăн чухлĕ сĕте çу çине куçарса шутласан, эпĕ государствăна 122 пăт сар çу туса панă. Вунă ĕнерен кун чухлĕ сĕт-çу туса пани республикăра халиччен пулман-ха.

Иртнĕ çул хăшпĕр ĕнесен сĕт тухăçлăхĕ чылай пысăкрах пулчĕ. Сăмахран, «Неженка» ятлă ĕне 5.543 килограмм, «Дочурка»—5.382 килограмм сĕт пачĕ. Ку вăл пирĕн ĕнесен сĕт тухăçлăхне ÿстермелли татах та пысăк майсем пуррине кăтартса парать.

Селекци станцийĕн фермине эпĕ вуниккĕмĕш çул ĕçлетĕп. Вунпĕр çул ытла дояркăра пурăнса, ĕçе лайăх вĕренсе çитрĕм.

Селекци станцийĕ, тĕпрен илсен, красногорбатовски ăратлă ĕнесем усрать. Эпир ĕнесене çулсеренех вăхăтра чуптарса хăваратпăр, вĕсенчен сывă та тĕреклĕ пăрусем илетпĕр. Пĕр ĕне те хĕсĕр юлни е пăру пăрахни пулман.

Сĕт ытларах суса илесси ĕнесене пĕтĕ вăхăтра мĕнле пăхса усранинчен тата вĕсене сума пăрахтарма пĕлнинчен нумай килет. Вăхăтра сума пăрахни ĕне çиллине канма пулăшать, пăруланă хыççăн сĕт хушма май парать.

Эпĕ ĕнесене пăрулас умĕн икĕ уйăх малтан сума пăрахатăп. Хăшпĕр ĕнесем сума пăрахтармалли вăхăт çитнĕ тĕле те талăкра 10—15 литр сĕт параççĕ. Ун пек ĕнесене сума пăрахтарма йывăр, анчах, вĕсене сума пăрахтарасах пулать.

Сума пăрахтарас умĕн ĕнене сĕтеклĕ тата концентратлă апатсем пама пăрахатăп. Ĕнерен сĕт суса илессине ĕриппĕн чакарса пыратăп. Малтанхи виçĕ кун хушшинче икшер хут сăватăп, унтан пĕр хут кăна сума тытăнатăп. Кайран ĕнене пĕр кун сиктерсе сăватăп, вара сума пачах пăрахатăп.

Ĕне çиллинче сĕт пухăнма пăрахсан, ĕнене каллех сĕтеклĕ тата концентратлă апатсем çитерме тытăнатăп. Пăрулас умĕн вунă кун малтан ăна сĕтеклĕ апатсем пама чарăнатăп, утăпа кăна тăрантаратăп.

Пăруланă тĕле пирĕн ĕнесем яланах лайăх ÿт-пÿллĕ пулаççĕ. Пăруланă ĕнесене, вĕсен çилли мĕнлине кура, 10—15 кунтан çеç тулли рационпа апат пама тытăнатпăр. Ĕне сĕт хушса пынă май, апат нормине ÿстерсе пыратпăр. Ĕнерен кашни талăкрах пĕр пек сĕт суса илме пуçласан, рациона тĕрлĕ йышши апат кĕртетпĕр.

Пирĕн ĕнесен рационĕнче 70 процент ытла сĕтеклĕ апатсем. Силос—питĕ паха апат. Эпир ăна хĕле кĕрсенех выльăхсене пама тытăнатпăр. Пирĕн дояркăсем халĕ пурте çакна лайăх пĕлеççĕ: витаминсем çулла—ешĕл курăкра, хĕлле — силосра. Витаминсем выльăхсене сывлăш пекех кирлĕ.

Ĕнен сĕчĕ чĕлхи çинче теççĕ ваттисем. Ку тĕрĕс ĕнтĕ. Анчах ваттисен сăмахĕ çумне «тата дояркăсен аллинче» тесе хушсан вырăнлă пек туйăнать.

Пирĕн ĕçре тата çакна яланах тĕп вырăна хумалла: выльăхсене юратса пăхмалла, кашни ĕнене тата унăн кăмăлне лайăх пĕлмелле. Ĕнесем ачашлăха юратаççĕ. Вĕсене нихçан та кăшкăрса хăратма юрамасть.

Пĕр-икĕ тĕслĕх. «Заря» ятлă ĕне хăйне хытă кăшкăрсан сĕт пачах памасть. Акă, тепĕр ĕне—«Дочурка». Ют çын сусассăн сĕт антармасть. Кĕркунне эпĕ отпускра пултăм. Çав вăхăтра вăл 5 литр таран сĕт чакарнă. Малтан талăкра 28 литр панă пулсан, 23—25 литр паракан пулнă. «Дочурка» апата та питĕ тирпет. Кăшман е сĕрулми кăштах вараланчăк пулсан, ăна çимест. Ăна эпĕ уйрăмах лайăх пăхатăп. Халĕ вăл талăкра 25 литр ытла сĕт парать.

Пирĕн фермăра выльăхсене кĕтÿре çÿретессине те лайăх йĕркеленĕ. Çуллахи вăхăтра сăвакан ĕнесене лагерьте усратпăр, вĕсене ешĕл курăк çинче, çĕрле те кĕтÿре çÿрететпĕр. Çав вăхăтрах çулса панă симĕс курăкпа тата концентратлă апатпа та тăрантаратпăр.

Ĕнене тĕрĕс суни те сĕт ытларах антарма, сĕт парĕсене лайăхрах ĕçлеттерме пулăшать. Ĕнесене сехет тăрăх, яланах пĕр вăхăтра сăватăп. Пăруланă хыççăн 2—3 уйăх хушши ĕнене талăкра тăваттăшар хут, унтан виçшер хут сăватăп.

Ĕне сăвас техникăна эпĕ лайăх вĕренсе çитрĕм. Сăвас умĕн те, сунă хыççăн та ĕне çиллине массаж тăватăп. Суса пĕтернĕ хыççăн ĕне çиллине таса алшăллипе шăлса типĕтетĕп.

Кашни ĕне умĕнче—кормушка, унтах—автопоилка. Ĕне хăй хăçан ĕçес тенĕ — çавăн чухне шыв ĕçме пултарать. Витене кăна мар, кормушкăсемпе савăт-сапасене те яланах таса тытатпăр.

Эпĕ тата çакна каласшăн: выльăхсене таса тытни кирлĕ. Çавăнпа та хам пăхакан ĕнесене кашни кунах щеткăпа тасататăп. Выртса вараланнă вырăнсене шывпа çуса илетĕп, лайăх шăлса типĕтетĕп. Ĕнесене кашни кун уçăлса çÿреме картишне кăларатăп. Çапла туни выльăх-чĕрлĕх сывлăхне çирĕплетме пулăшать.

Малта пыракан совет науки хушнă пек ĕçлесен, зоотехникăпа ветеринари кăтартăвĕсене пурнăçласан, кирек хăш ĕнерен те сĕт нумай суса илме пулать. Çавăнпа та зоотехника правилисене, малта пыракансен опытне куллен-кун вĕренес пулать. Эпир зоотехника курсĕнче вĕренетпĕр, сĕршывра чапа тухнă дояркăсен ĕçĕсем çинчен тĕплĕрех пĕлме тăрăшатпăр.

1951 çулхи çитĕнÿсемшĕн СССР Верховнăй Совет Президиумĕ мана тата пĕрле ĕçлекен Антонина Ефимова дояркăна, ферма бригадирне Никитин юлташа Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăларĕ. Награда пире татах та хастарлăрах ĕçлеме хавхалантарать.

Пирĕн ферма коллективĕ кăçал çĕнĕ çĕкленÿпе ĕçлет, ĕнесен сĕт тухăçне ÿстерессишĕн кĕрешет. Ку таранччен тунă çитĕнÿсем маншăн çителĕклĕ мар-ха. Эпĕ 1953 çулта кашни ĕнерен 5.000-шер килограмм сĕт суса илме тăрăшатăп.

## Сĕт тухăçлăхне ÿстерсе пырар

**Улатăр районĕнчи «Путь Ильича» колхозри доярка М. Н. Маринина каланă сăмахран**

1952 çулта план тăрăх пирĕн колхозăн кашни ĕнерен 1.600-шер литр сĕт суса илмеллеччĕ, эпир 1.740-шер литр сĕт суса илтĕмĕр. Пирĕн колхозри дояркăсем пурте ĕнесенчен сĕт суса илмелли плана ирттерсе тултарчĕç.

Эпĕ ĕне фермине тăваттăмĕш çул ĕçлетĕп. Мана 10 ĕне çирĕплетсе панă. Иртнĕ çулта эпĕ хама çирĕплетсе панă кашни ĕнерен 1.844-шар литр сĕт суса илтĕм.

Нумай çулсем хушши фермăра ĕçленĕ май эпĕ хам пăхакан ĕнесен йăлисене лайăх вĕренсе çитрĕм. Вĕсене тăрăшса пăхатăп, выльăх-чĕрлĕхе тăрантарас тата пăхса усрас ĕçре зоотехникăпа ветеринари правилисене пурнăçласа пыратăп.

Пирĕн фермăра пур ĕçсене те çирĕплетнĕ кун йĕрки тăрăх тăваççĕ. Чи малтан эпĕ сĕт нумай паракан ĕнесене сума тытăнатăп. Ĕнесене эпир кашни кунах щеткăпа тасататпăр, вараланнă вырăнсене ăшă шывпа çăватпăр.

Ĕнесем сĕт нумайрах антарччăр тесен, вĕсене пĕлсе тăрантарни кирлĕ. Ĕне сĕт хушма чарăниччен апат рационне ÿстерсех пымалла. «Мерная», «Кисулька» тата «Муза» ĕнесем малтан 2.500 литртан ытла сĕт памастчĕç. Эпĕ вĕсенчен виçшер пин литр таран сĕт суса илме тытăнтăм. Ĕнесене эпĕ ывăçпа сăватăп. Сунă вăхăтра ĕне çиллине массаж тăватăп. Çакă вăл пĕтĕм сĕте суса илме май парать. Ку вăл питех те кирлĕ, мĕншĕн тесен юлашкинчен тухакан сĕтре çу нумай.



Ĕнесене сума пăрахтарас ĕç çине эпир тимлĕ пăхатпăр. Пăруличчен 45—65 кун маларах ĕнесене майĕпен сĕтеклĕ апат çитерме чарăнатпăр. Сума пăрахтарас умĕн кун касиччен темиçе хут сăвас вырăнне сахалтарах сума тытăнатпăр, сĕтеклĕ апат сахалтарах паратпăр, концентратлă апатсем пама пăрахатпăр.

Пăруланă хыççăн ĕнесене утăпа тăрантаратпăр, унтан майĕпен сĕтеклĕ тата концентратлă апатсем çитерме тытăнатпăр.

Выльăх апачĕпе лайăхрах усă курас тесе, утă-улăма вĕтетсе, çăнăх сапса çитеретпĕр. Кăшмана, сĕрулмине малтан çăватпăр, кайран тымарçимĕç вĕтетмелли машинăпа туратпăр. Пирĕн выльăх апачĕ вĕтетсе хатĕрлемелли ытти машинăсем те пур.

Выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ÿстерес ĕçре фермăсенчи ĕç вăйĕ нумай илекен ĕçсене механизацилени пысăк вырăн йышăнать. Пирĕн ĕне витинче автопоилкăсем вырнаçтарса лартнă. Ĕнесем яланах хăйсене кирлĕ чухлĕ шыв ĕçме пултараççĕ.

Витере тытса усранă чухне эпĕ хам пăхакан кашни ĕнене вăтам шутпа 6 килограмм утă, 4 килограмм пăспа çемçетнĕ улăм, 20 килограмм таран силос, 10 килограмм сĕрулми тата 2 килограмм посыпка паратăп.

Зоотехника тĕлĕшĕнчен пĕлÿсене ÿстерес тесе, фермăсенче ĕçлекенсем агрозоотехникăна вĕренмелли виçĕ çуллăх курсенче вĕренеççĕ. Эпир курсра илнĕ пĕлÿпе тата малта пыракансен опычĕпе хамăрăн ĕçре усă курма тăрăшатпăр. 1953 çулта эпĕ кашни ĕнерен 2.500-шер литртан кая мар сĕт суса илме пулатăп.

## Лайăх витесем тăвар

**Канаш районĕнчи «Канаш» колхоз председателĕ И. Л. Львов юлташ каланă сăмахран**

Партипе правительство пулăшнипе юлашки çулсенче общественлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе пирĕн колхоз пысăк çитĕнÿсем турĕ. Выльăхсен хисепĕ çултан-çул хăвăрт ÿсе пычĕ, вĕсенчен илекен продукцин тухăçлăхĕ те чылай ÿсрĕ.

Выльăх-чĕрлĕхе ĕрчетме ăшă, çутă витесем, çирĕп çурт-йĕрсем кирли пуриншĕн те паллă. 1950 çулта эпир колхозăн общественлă çурт-йĕрне çĕнĕрен лартма виçĕ çуллăх план туса çирĕплетрĕмĕр. Çав плана пурнăçа кĕртсе пырса 1950—1951 çулсенче выльăх-чĕрлĕх валли саман кирпĕчрен 6 вите, пилĕк пÿрт туса лартрăмăр.

1952 çулта колхоз çĕнĕрен 53 пин саман кирпĕчĕ çапса хатĕрлерĕ. Унтан 140 пуç сысна, 50 пуç ĕне вырнаçтарса усрамалăх витесем тата кухня çурчĕ лартрăмăр. Саман кирпĕчренех тата клуб, правлени çурчĕ туса лартнă, 150 тонна силос кĕмелĕх траншея тунă.

Строительство ĕçĕнче пурĕ те 26 колхозник кăна ĕçлет. Ĕçе тĕрĕс организацилесе ертсе пынипе вĕсем строительство ĕçĕсене ăнăçлă туса пычĕç, кĕре кĕричченех çирĕп çурт-йĕрсем туса лартрĕç.

Пур витесене те эпир типовăй проект тăрăх лартнă: витесенче тислĕк шĕвекĕ юхса тухмалли валаксем, тислĕк шĕвекне пухса илмелли вырăнсем тунă. Витесен никĕсне тата урайĕсене шлакпа бетонран хывнă, выльăхсем тăмалли вырăнсене йывăçран тунă.

Пирĕн колхозра строительство ĕçĕсене туса пыма яланлăхах бригада организациленĕ. Вăл бригадăри колхозниксен квалификацийне ÿстерсе пыратпăр. Çакă вăл строительство ĕçĕнчи сезонлăха пĕтерме пулăшрĕ, çурт-йĕрсем тăвас ĕçĕн пахалăхне ÿстерчĕ, ĕçĕн хăйне ларакан хакне нумай йÿнетме тата ĕçе планпа палăртнă вăхăтра пурнăçласа пыма май пачĕ.

Хальхи вăхăтра строительство бригади йывăç касса турттарса хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлет. Çуркунне умĕн хăма çурма тытăнать, чÿрече рамисемпе кăчăкĕсене тăвать.

1953 çулта колхоз çĕнĕрен пысăк çурт-йĕрсем тума палăртнă. Выльăх-чĕрлĕхĕн йышĕ хушăнса пынă май, çурт-йĕрсем те лартсах пырас пулать.

Выльăхсем валли апат хатĕрлекен кормоцех тăвас тетпĕр. Çак цехра пур выльăх валли те апат-çимĕçсене наука вĕрентнĕ пек хатĕрлесе памалла пулать.

Халĕ пирĕн общественлă выльăхсем пурте пекех саман кирпĕчрен тунă аслă, çутă, ăшă витесенче пурăнаççĕ. Самантан тунă çурт-йĕрсем йÿнĕ те, ăшă та тата çирĕп те.

## Кашни сурăхран 5 килограмм çăм

**Етĕрне районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхозри сурăх пăхакан Н. М. Крынецкий юлташ каланă сăмахран**

1952 çулта пирĕн колхоз сурăхсем ĕрчетес тĕлĕшпе пысăк çитĕнÿ турĕ. Кашни 100 сурăхран 142 путек илсе ÿстерни, сурăхсенчен 4,65-шер килограмм çăм касса илнĕ, фермăра ÿстернĕ путексемпе сурăхсем ĕрчетмелли государство планне ăнăçлă тултарнă.

Иртнĕ çулсенче эпир сурăхсен ăратлăхне хăпартас тĕлĕшпе тимлесе ĕçлерĕмĕр. Вырăнти шултра çăмлă вĕтĕ сурăхсене усранинчен усси сахал. Вĕсене советски меринос текен паха ăратлă такасемпе чуптарса, çулсерен çав ăратăн паха енĕсене йышăнса илнĕ путексене ăруллăх уйăрса хăварнипе лайăхлатса пырас пулать. Нумай çул хушши çапла туса пынипе пирĕн фермăра халĕ шултра çăмлă вырăнти вĕтĕ сурăхсем пачах юлмарĕç, вĕсем вырăнне советски меринос ăруран пулнă вĕтĕ çăмлă паха сурăхсем усрама пуçларăмăр. Ăратлă сурăхсен тухăçлăхĕ те пысăк, çăмĕ те паха, вĕсем путексем те ытларах тăваççĕ.



Çăм тухăçлăхĕпе пахалăхĕ сурăхсене мăнтăр тата таса тытнинчен нумай килет. Фермăра халĕ пирĕн 302 сурăх. Эпир вĕсене иккĕн пăхатпăр.

Хальхи вăхăтра сурăхсене талăкра паракан рациона эпир çак апатсене кĕртнĕ: 1,5 килограмм утă, 1 килограмм силос, 0,8 килограмм улăм, 1,5 килограмм салат пăтти, улăма тураса салат пăттипе хутăштарса çитеретпĕр. Талăкра хĕлле — икĕ хутчен, çулла — виçĕ хутчен тăраничченех шыв ĕçтеретпĕр.

Пăрамламалли сурăхсене яланах уйăх малтан уйрăм пăхма пуçланă.

Çамрăк путексене уйрăммăн тăрантарни питĕ вырăнлă. Эпир кашни путеке лайăх пăхса илетпĕр, тĕрĕс-тĕкел ÿстеретпĕр.

1953 çулта кашни 100 сурăхран 150 путек, кашни сурăхран вăтам шутпа 5-шер килограмм çăм касса илме обязательство илсе социализмлă ăмăртăва хутшăнатăп.

## Наука хушнă пек ĕçлетпĕр

**Йĕпреç районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ М. П. Яковлев юлташ каланă сăмахран**

Общественлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç нумаях та пулмасть-ха пирĕн колхозăн чи кая юлнă отраслĕ пулнă. Колхозра 11 лаша, майракаллă шултра выльăхсем 7 пуç, 5 сысна, 14 сурăх, кайăк-кĕшĕксем 11 пуç (вĕсенчен ытларахăшĕ автансем) пулнă. Паллах, эпир выльăх-чĕрлĕхрен тупăш нимĕн чухлĕ те илеймен.

Халĕ пачах урăхла. Хальхи вăхăтра пирĕн фермăсенче 137 лаша, майракаллă шултра выльăхсем 217 пуç, 307 сысна, 247 сурăх, кайăк-кĕшĕксем 1.200 пуç шутланаççĕ. Çакă вăл выльăх-чĕрлĕхрен илекен тухăçлăха тата колхозниксен тупăшне ÿстерме май пачĕ. Выльăх-чĕрлĕхрен пĕлтĕр 200 пин тенкĕлĕх тупăш илнĕ.

Государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли обязательствăсене колхоз вăхăтра тултарса пырать. 1953 çулшăн аш-какай памалли плана эпир пĕлтĕрех 73 процент, сыснасем памалли плана — 43 процент тултартăмăр.

Иртнĕ çулта выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне палăрмаллах ÿстертĕмĕр. Тĕслĕхрен, 1951 çулта сăвакан кашни ĕнерен 847-шер литр сĕт суса илнĕ пулсан, иртнĕ çулта кашни ĕнерен 1.293-шер литр сĕт суса илтĕмĕр. Çапла ĕнтĕ, кашни ĕнерен сĕт суса илесси, вăтам шутпа, пĕр çул хушшинче 446 литр чухлĕ ÿснĕ.

Тупăш ÿсни строительство ĕçĕсене анлă сарса яма май пачĕ. Юлашки çулсенче кăна эпир лаша вити, сысна витисем виççĕ, сурăх вити, пăру витисем виççĕ, кайăк-кĕшĕк витисем иккĕ, кормокухня иккĕ турăмăр, ĕне тата сысна витисене тĕпрен юсарăмăр. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекен работниксем валли пурăнмалли çурт лартрăмăр.

Электростанци лартрăмăр, электричество энергийĕпе усă курса фермăна шыв парассине тата выльăх-чĕрлĕх апачĕ хатĕрлес ĕçе механизацилерĕмĕр.

Наукăна тата малта пыракан опыта асра тытса, эпир пăрусене çитĕнтерес ĕçре çĕнĕ меслетпе усă куратпăр. Суралнă пăрăва эпир простынăпа витсе ăшă пÿлĕме мар, сивĕ пÿлĕме хупатпăр, çав пÿлĕмĕн урайне типĕ айсарăмĕ саратпăр. Пăру типсе çитсен, простынне илетпĕр, пăруне вара çав пÿлĕмрех хăваратпăр.

Пăрусене сивĕ пÿлĕмре усрани вĕсене сывă ÿстерме май парать, ун чухне пăру йывăрăшĕ те хăвăрт ÿссе пырать. Çапла, пирĕн фермăри пăрусем малтанхи кунсенче талăкне 600—700-шер грамм ÿссе пыраççĕ. Пĕлтĕр пăруланă пăрусене пурне те эпир сивĕ пÿлĕмре усрарăмăр, вĕсенчен пĕри те вилмерĕ. Кунта пăру пăхакансем тăрăшса ĕçленине те палăртас пулать. Вĕсенчен нумайăшне ĕçшĕн хушса тÿлерĕмĕр.

Партин XIX-мĕш съезчĕ ялхуçалăхĕ умне пысăк задачăсем лартрĕ. Мĕнпур ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ÿстерес, общественлă выльăх-чĕрлĕх йышне нумайлатас тата унăн тухăçлăхне хăпартас тĕлĕшпе пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх планра кăтартса панă задачисене пурнăçлас тесе, пирĕн колхозниксем хăйсен пĕтĕм вăйне хурса ĕçлеççĕ.

## Çамрăк выльăхсене лайăх пăхар

**Советски районĕнчи Карл Маркс ячĕпе тăракан колхозри пăру пăхакан В. А. Андреева юлташ каланă сăмахран**

Ĕне фермине пăрусем пăхса улттăмĕш çул ĕçлетĕп. Çак вăхăтра эпĕ пурĕ 175 пăру çулталăка çитиччен ÿстерсе патăм, кашни пăрăва тĕрĕс-тĕкел пăхса ÿстертĕм. Иртнĕ 1952 çулта 35 пăру пăхрăм. Вĕсем пурте аван хушăнса пычĕç, мăнтăр ÿсрĕç.

Колхозра пăрусем усрамалли ăшă та çутă вите пур. Кашни пăру уйрăм, таса, çутă пÿлĕмре тăрать. Ĕçсене фермăра çирĕп йĕрке тăрăх туса пыратпăр. Ирхине ĕçе 5 сехетре пуçлатпăр та каçхине 10—11 сехетре тин пĕтеретпĕр. Кунне пăрусене 4 хут апат паратпăр, утă, кăшман, клевер, силос çитеретпĕр.

Икĕ уйăха çитиччен пăрусене 300—350-шар литр сĕт тата 180—200-шер литр хăймине илнĕ сĕт ĕçтеретпĕр, сĕлĕ е урпа çăнăхĕ ярса шыв паратпăр, пăрçа çăнăхĕнчен кĕсел пĕçерсе çитеретпĕр тата çулçă апат паратпăр.

Çуллахи вăхăтра пăрусене эпир ятарласа уйăрса панă уйрăм çаран çинче тытатпăр, каçхине те çавăнтах туса панă картара усратпăр.

Иртнĕ çулта эпĕ 300 ĕçкунĕ ĕçлесе турăм. Ĕçкунĕсемшĕн 80 пăт ытларах тĕш тырă, 120 пăта яхăн çĕрулми тата ытти пахча çимĕçсем илтĕм. Пăрусене лайăх пăхса ÿстернĕшĕн колхоз мана çулсеренех хушса тÿлет.

Малашне те тăрăшса ĕçлесе, хамăр колхоз фермине пăрусем лайăх ÿстерсе пама сăмах паратăп.

## Симĕс конвейер туни пулăшрĕ

**Чкаловски районĕнчи «Гвардеец» колхозри доярка П. В. Заплаткина юлташ каланă сăмахран**

Ĕне фермине эпĕ 6 çул хушши ĕçлетĕп. Халĕ ĕнтĕ, выльăх апачĕ çителĕклĕ хатĕрлесе пынă май, фермăсенче ĕçлеме савăнăçлă. 1951 çулта мана сума çирĕплетнĕ 10 ĕнерен эпĕ 1.806-шар литр сĕт суса илнĕччĕ. 1952 çулта вĕсенчен эпĕ 2.224-шар литр суса илтĕм.

Ĕнесене эпир зоотехниксем туса панă рацион тăрăх çитеретпĕр, фермăри ĕçсене колхоз правленийĕ çирĕплетсе панă йĕркепе туса пыратпăр. Хальхи вăхăтра ĕнесене талăкра 20-шер килограмм чĕкĕнтĕр, 30-шар килограмм силос, 2-шер килограмм посыпка тата, кăнтăрла картишне кăларсан, тулă арпи çитеретпĕр.

Ĕнесене пăрулас умĕн чĕкĕнтĕр çитерме пăрахса 10-шар килограмм утă çитерме тытăнатпăр. Пăруланă хыççăн виçĕ кунтан каллех ĕриппен чĕкĕнтĕр çине куçарса 10-мĕш кунран рационпа пăхнă чухлĕ çитерме пуçлатпăр. Çак вăхăтран пуçласа ĕнесене нумай çул ÿсекен курăк утине 10-шар килограмм тата посыпка, кантăрвăрри чÿсти пама пуçлатпăр, талăкра 4 хутчен ăшă шывпа шăваратпăр. Туранă улăма посыпкăпа пăтратса панă чухне эпир яланах кашни ĕне пуçне 50-шар грамм тăвар яратпăр.

Фермăри ĕçе кулленех ирхине 4 сехетре тухатпăр. 5 сехетре малтанхи хут сăватпăр. Сунă хыççăн ĕнесене тасатса 7 сехетре уçăлма кăларатпăр. Çак вăхăтра пĕр доярка ĕнесене шăварма тытăнать, ыттисем витесене тасататпăр.

Витесене тасатса çитернĕ тĕле виçĕ колхозник ĕнесем валли силос, турасă хатĕрленĕ чĕкĕнтĕр турттарса параççĕ.

Кăнтăрла çитес умĕн кормушкăсем çине силос хыватпăр, ĕнесене витене кĕртетпĕр. Кăнтăрла иртсен пĕр сехетре ĕнесене иккĕмĕш хут сăватпăр. Ĕне çиллине сăвас умĕн яланах ăшă шывпа çуса шурă алшăллипе типĕтетпĕр, массаж тăватпăр, кайран каллех алшăллипе шăлса типĕтетпĕр. Сунă хыççăн ĕнесем каллех картишне тухаççĕ. Кун хыççăн ĕнесене посыпкăпа пăтратса паратпăр.

Каçхине 7 сехетре ĕнесене виççĕмĕш хут сăватпăр та пăруланă ĕнесене 10-шар килограмм утă, пăруламаннисене 10-шар килограмм арпа паратпăр.

Тÿрех калас пулать, ĕнесене эпир çуллахи вăхăтра та тăтăшах симĕс курăк тата ытти сĕтеклĕ апат паратпăр.

1953 çулта эпир ĕнесен сĕт тухăçлăхне татах хăпартма пултаратпăр. Çакна тума пирĕн выльăх апачĕ те çителĕклĕ тата ăсталăх та пур. Выльăх-чĕрлĕхе пăхса усрама эпир кăçалхипе виççĕмĕш çул колхозра организациленĕ курсра вĕренетпĕр.

1953 çулта хамăн ĕнесенчен 2.500-шер литртан кая мар сĕт суса илме сăмах паратăп.

Демократиллĕ Германи Республикинчи нумай ялсенче батрак пулнă çынсемпе ĕçхресченĕсем производствăллă ялхуçалăх кооперативĕсене пĕрлешеççĕ. Альтенбург округĕнче (Лейпциг хули сывăхĕнче) организациленĕ кооператива хресченсем Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ ятне панă.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ ячĕпе тăракан ялхуçалăх кооперативĕн руководителĕ Шмитд (сулахайран иккĕмĕшĕ) кооператив членĕсене хуçалăха ÿстермелли планпа паллаштарать.

ЦЕНТРАЛЬБИЛЬД фотоÿкерчĕкĕ.

## Центральнăй халăх правительствин совечĕ халăх представителĕсен Пĕтĕм Китайри пухăвне пухасси çинчен решени йышăннă

ПЕКИН, январĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Китайăн центрта тухса тăракан мĕнпур хаçачĕсем Центральнăй халăх правительствин совечĕн январĕн 13—14-мĕшĕсенче пулса иртнĕ ларăвĕсем çинчен Синьхуа агентстви пĕлтернине пичетленĕ. Центральнăй халăх правительствин совечĕ вăл ларусенче халăх представителĕсен Пĕтĕм Китайри пухăвне тата халăх представителĕсен мĕнпур степенлĕ пухăвĕсене пухасси çинчен тăракан ыйтăва пăхса тухнă.

Центральнăй халăх правительствин совечĕ пĕр кăмăллă пулса йышăннă решенире пурне те тивĕç суйлавсем тăрăх 1953 çулта халăх представителĕсен мĕнпур степенлĕ пухăвĕсене, унтан халăх представителĕсен Пĕтĕм Китайри пухăвне пухасси çинчен каланă. Пĕтĕм Китайри халăх представителĕсен пухăвĕ конституци йышăнать, строительствăн пилĕк çуллăх планне çирĕплетет тата Центральнăй халăх правительствине çĕнĕрен суйлать.

Центральнăй халăх правительствин совечĕ Китай халăх республикин конституцийĕн проектне туса хатĕрлес тĕлĕшпе Комисси тунă. Ăна Мао Цзе-дун председатель пулса ертсе пырать. Çавăн пекех Китай Халăх Республикинче суйлавсем ирттермелли Положени проектне туса хатĕрлес тĕлĕшпе Комисси тунă. Комисси председателĕ — Чжоу Энь-лай.

## Польша халăх хуçалăхĕн çитĕнĕвĕсем

ВАРШАВА, январĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Çĕршыври малта пыракан предприятисем январь уйăхĕн малтанхи кунĕсенчен пуçласах ултă çуллăх планăн тăваттăмĕш çулĕнчи производство планĕсене тултарассишĕн ăнăçлă кĕрешеççĕ.

Пир-авăр промышленноçĕнче Лодзь хулинчи Дзержинский ячĕпе, Карл Либкнехт ячĕпе, 1905 çулхи Революци ячĕпе тăракан тата ытти фабрикăсем малта пыраççĕ. Вăл фабрикăсем январь уйăхĕнчи пĕрремĕш вунăкунлăхри заданисене чылай ирттерсе тултарнă. Роза Люксембург ячĕпе тăракан пир-авăр фабрикинчи рабочисем уйрăммăнах пысăк çитĕнÿсем тунă. Вĕсем вунăкунлăхри задание 22,5 процент ирттерсе тултарнă.

Феликс Дзержинский ячĕпе тăракан, азот тăвакан заводри рабочисем те (Краков воеводстви) заданисене тултарассишĕн тата ирттерсе тултарассишĕн ăнăçлă кĕрешеççĕ. Январь уйăхĕнчи пĕрремĕш вунăкунлăхăн планне вĕсем 104 процент тултарнă. Çĕршыври ытти нумай фабрикăсемпе заводсен коллективĕсем те январь уйăхĕнчи пĕрремĕш вунăкунлăхри производство заданийĕсене ирттерсе тултарни çинчен пĕлтереççĕ.

## Чехословакири металлургсен ăмăртăвĕ

ПРАГА, январĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Çĕнĕ çулăн малтанхи кунĕсенчен пуçласах Чехословакири металлурги завочĕсенче производство заданийĕсене срокчен тултарассишĕн ăмăрту саралнă.

Хурçа хăвăрт майпа шăратмалли мессет анлăн саралнă. Çĕнĕ çулăн малтанхи вунă кунĕ хушшинче Витковицк хулинчи Клемент Готвальд ячĕпе тăракан металлурги комбинатĕнчи хурçă шăратакан цехри бригадăсем 66 хутчен хăвăрт майпа хурçă шăратса кăларнă.

Подбрезов хулинчи металлурги завочĕ çĕршывра малта пыракан завод шутланать. Çав завод коллективĕ, хурçă шăратмалли вăхăта чакарса, иртнĕ эрне хушшинче планран ирттерсе 600 тонна хурçă шăратса кăларнă.

## Румынире ĕççынниссен сывлăхĕшĕн тăрăшни

БУХАРЕСТ, январĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Румынири халăх влаçĕ ĕççыннисен сывлăхне сыхлассишĕн куллен тăрăшать. Çĕршывра чиртен сыватмалли тата профилактика учрежденийĕсем, санитари тата санитарипе эпидеми станцийĕсем нумай тунă. Хальхи вăхăтра тăвакан Дунай-Хура тинĕс каналĕн çулĕ çинче юлашки вăхăтра поликлиникăсем уçнă. Вăл поликлиникăсене лайăх йĕркеленĕ.

Гигиенăн наукăпа тĕпчев институчĕн коллективĕ пысăк ĕç туса ирттерет. Вăл хăйĕн ĕçне Совет Союзĕнчи наука тăрăх туса пырать. Ĕлĕкхи вăхăтра хытă сарăлнă чир-чĕрсем халĕ пĕтсе пыраççĕ. Сивчире пула вилекенсен хисепĕ 37 процент чухлĕ чакнă.

Халĕ çĕршывра вăтам квалификациллĕ медицина кадрĕсем хатĕрлекен 77 шкул ĕçлет, медицина техникумĕсем 18 уçнă.

## Финляндири работницăсем хăйсен пурнăçне лайăхлатма ыйтаççĕ

ХЕЛЬСИНКИ, январĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). «Тюэкансан саномат» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Тампере хулинче пир-авăр промышленноçĕнче ĕçлекен работницăсен пухăвĕ пулса иртнĕ. Вăл пухăва пир-авăр промышленноçĕнчи рабочисен профсоюзĕн вырăнти организацийĕ пухнă. Пухура Финляндири работницăсен пурнăçĕ çинчен сÿтсе явнă. Унта çакна палăртнă: арçынсемпе пĕр пекех ĕç тусан та, хĕрарăмсене арçынсенчен сахалтарах ĕç укçи тÿлеççĕ. Çавна май хĕрарăмсен ĕç укçине арçынсен ĕç укçипе пĕрпеклетме закон йышăнма кирлине, çавăн пекех ĕçсĕрлĕхпе кĕрешме кирлине кăтартса панă.

Пир-авăр промышленноçĕнче ĕçлекен работницăсен пухăвĕ мартăн 8-мĕшĕнче Тампере хулинче пĕтĕм Финляндири работницăсен съездне пухма йышăннă. Вăл съездра Финляндири работницăсен пурнăçĕ çинчен тата социальнăй законсем çинчен сÿтсе явмалла.

### ИТАЛИРЕ СУЙЛАВ РЕФОРМИН ПРОЕКТНЕ ХИРĔÇ ТĂРАÇÇĔ

РИМ, январĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Январĕн 13—14-мĕшĕсенче пĕтĕм Италире халăхăн пысăк демонстрацийĕсем пулса иртнĕ. Унта суйлав системин реформи çинчен правительство тунă проекта хирĕç протестленĕ.

«Унита» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, январĕн 13-мĕшĕнче ĕççыннисен пĕтĕмĕшле забастовкине пула Савона хулинче виçĕ сехет хушши нимĕнле предприятисем те ĕçлемен. Пиншер ĕççыннисем хула урамĕсем тăрăх утса иртнĕ. Вĕсем правительство проектне хирĕç протестлекен листовкăсем пăрахнă. Правительство проектне хирĕç протестлесе Сестри-Левантери (Генуя провинцийĕ) ĕççыннисем те пĕтĕмĕшле забастовка ирттернĕ.

Генуя хулинчи Больцането тата Риваролo районĕсенчи 40 пин ĕççынни пĕр сехет хушши ĕçлемен. Правительство проектне хирĕç протестлекен забастовкăсем çавăн пекех Милан сывăхĕнчи районсенчи — Лодири тата Кодоньори 230 фермăра, Бреша провинцийĕнче тата Турин, Казал, Бьелл, Деррара тата Скио хулисенчи вуншар заводсенче пулса иртнĕ.

Гуардавалло тата Пьембино хулисенче пулнă демонстрацисенче полици 10 çынна амантнă. Рионеро-ин-Бультурара (Потенца провинцийĕ) демонстрацие хутшăннă 12 çынна, Бодолатора — (Катандзаро провинцийĕ) 33 çынна арестленĕ.

### АВСТРИРЕ ХАКСЕМ ÿСЕÇÇĔ

ВЕНА, январĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). «Дер Абенд» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, январĕн 13-мĕшĕнчен пуçласа Австрири мĕнпур пасарсенче пахча çимĕçсемпе улма-çырла хакĕсем 10—50 процент чухлĕ ÿснĕ.

Хаклă тăракан улма-çырласене Испанирен илсе килме ирĕк парса, тесе çырать хаçат, суту-илÿпе юсав министерстви Австрие Италирен, уйрăммăнах Венгрирен йÿнĕ улма-çырласене илсе килме ирĕк парасшăн мар.

### ĔÇ ТУПАЙМАННИСЕН ХИСЕПĔ ÿСЕТ

КАРАЧИ, январĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). «Синд обсервер» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Пакистанри учредительнăй пухăвĕн членĕ Нур Ахмед премьер-министра тата ĕçлĕх министрне ĕçсĕр тăрса юлнă çынсене ĕç тупса парас шутпа васкавлă мерăсем йышăнма чĕнсе каланă. Юлашки вăхăтра ĕç тупайманнисен хисепĕ питĕ нумай ÿснĕ.

Нур Ахмед çакна кăтартса панă: официальнăй йĕркепе регистрациленĕ ĕç тупайман çынсем кăна хальхи вăхăтра Пакистанра пĕр миллион çынна яхăн шутланаççĕ.

### ТУНИСРИ АРЕСТСЕМ

ПАРИЖ, январĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). «Юманите» хаçат çапла пĕлтерет: Францин колонири влаçĕсен приказĕ тăрăх, Тунисри Коммунистсен партийĕн Политбюро членне Барек Рааема арестленĕ.

## Корейăри ĕçсем

### ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, январĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: иртнĕ кун хушшинче Корея Халăх çарĕн чаçĕсем Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсемпе пĕрле Америкăпа Англи интервенчĕсен тата Ли Сын Ман çарĕсен разведка тăвакан отрячĕсене хирĕç персе тăнă. Фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

Ĕнер çĕрле Америкăн «вĕçекен крепоçĕсем» Кăнтăр Хамген провинцийĕнчи Ковонь уездĕнчи Унгокри ятлă ял çине, унта нимĕнле çар объекчĕсем çук пулин те, пырса тапăннă, тискеррĕн бомбăсем пăрахнă. Хĕрарăмсене, ватă çынсемпе ачасене нумай вĕлернĕ тата амантнă. Пурăнмалли нумай çуртсене аркатнă.

Самолетсене хирĕç кĕрешекен салтаксем паян тăшманăн 2 самолетне персе ÿкернĕ.

### АМЕРИКА АВИАЦИЙĔ КОРЕЙĂРИ ХУЛАСЕМПЕ ЯЛСЕМ ÇИНЕ ТИСКЕРРĔН БОМБĂСЕМ ПĂРАХАТЬ

ПХЕНЬЯН, январĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Пхеньянăн кăнтăр районĕнче пăрахнă хыççăн чылай вăхăт хушши иртсен тин çурăлакан бомбăсем иккĕмĕш кун ĕнтĕ çурăлаççĕ. Вăл бомбăсене Америкăн сывлăшри вăрă-хурахĕсем темиçе кун каярах пăрахнă. Америка самолечĕсем хула сывăхĕнчи ялсем çине, çулсемпе пасарсем çине кунĕн-çĕрĕн бомбăсем пăрахаççĕ тата пулеметсенчен переççĕ.

Америка авиацийĕ Çурçĕр Корейăри ытти хуласемпе ялсем çине те тискеррĕн тапăнма чарăнмасть. Корейăри Центральнăй телеграф агентстви çакна паллă тăвать: юлашки вăхăтра уйрăммăнах ялсем çине тискеррĕн бомбăсем пăрахаççĕ.

### Демократиллĕ Корея Халăх Республикинчи хресченсем фронта пулăшаççĕ

ПХЕНЬЯН, январĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Корейăри хаçатсем Корея хресченĕсем хăйсен çулпуçĕ Ким Ир Сен патне янă телеграммăсене кашни кунах пичетлеççĕ. Вăл телеграммăсенче хресченсем фронта пулăшмалли фонд валли тырă уйăрни çинчен рапорт параççĕ. Фронта пулăшмалли фонда рис парассишĕн пыракан юхăм Çурçĕр Корейăри мĕнпур провинцисенче саралнă.

Хаçатсем çавăн пекех хресченсен телеграммисем çине Ким Ир Сен тав туса çырнă телеграммăсене пичетлеççĕ.

Малта пыракансенчен пример илсе, республикăри хресченсем фронта пулăшас тĕлĕшпе тунă фонда пиншер михĕ чи лайăх рис параççĕ.

### Америка агрессорĕсем тыткăнри çар çыннисене вĕлереççĕ

ПЕКИН, январĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Кэсонран çапла пĕлтерет: американецсем пĕлтернĕ тăрăх, Янмутай лагерĕнче (Кăнтăр Корея) тата Чечжудо утравĕ çинчи Мосульпо лагерĕнче январĕн 9-мĕшпе 12-мĕшĕсенче тата «çакăнса вилнĕ» 2 çар çыннине тупнă. Хăйсем тунă преступленисене—тыткăна лекнĕ çар çыннисене вĕлернине пытарас шутпа, тесе çырать корреспондент, американецсем тыткăна лекнĕ çак 2 çын «коммунистсене хирĕç тăракан çынсем» пулнă, вĕсем хăйсен килĕсене каясшăн пулман тесе, элек сараççĕ.

ПЕКИН, январĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Январĕн 14-мĕшĕнче Корейăри перемири çинчен пыракан калаçусенчи Корейăпа Китай делегацийĕн пуçлăхĕ Нам Ир генерал американецсем январĕн 9-мĕшĕнче тыткăна лекнĕ çар çыннисен Янмутай лагерĕнче тыткăнри тата тепĕр çар çыннине вĕлернине хирĕç татăклăн протестлени çинчен пĕлтернĕ.

### АМЕРИКА САЛТАКĔСЕМ ÇАРТАН ТАРНИ ÇИНЧЕН

ВАШИНГТОН, январĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Вашингтонри «Таймс геральд» хаçат редакци çырнă статьяна пичетлесе кăларнă. Унта çапла каланă: нумай салтаксем Америка çарĕнчен тараççĕ, мĕншĕн тесен Корейăри вăрçă «американецсене нимĕн чухлĕ те хавхалантармасть».

«Хальхи вăхăтра Америка çарĕнчен таракансем питĕ нумай пулнишĕн Трумэн Корейăри хăйĕн авантюрине критиклекенсене айăплама хăтланнă чухне Трумэнăн совеçĕ таса пулман, тесе çырать хаçат. — Çартан салтаксем тарнишĕн кăна мар, çавăн пекех Корейăри мĕнпур çухатусемшĕн ответ тытмаллине Трумэн лайăх пĕлет...»

БЕРН, январĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Январĕн 14-мĕшĕнче «Бернер тагблад» хаçат Америкăн Корейăри çарĕнчен таракансен хисепĕ ÿсни çинчен Нью-Йоркран пĕлтернине пичетлесе кăларнă.

Хаçат çапла çырать: Корейăри вăрçă пуçланнăранпа Америкăн 49.000 салтакĕ çартан тарнă.

### Эррио Францин Наци пухăвĕнче тухса калани

ПАРИЖ, январĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Парижри радио çапла пĕлтерет: январĕн 13-мĕшĕнче çĕрле Эдуард Эррио, ăна тепĕр хут Наци пухăвĕн председательне суйланă хыççăн, сăмах тухса каланă. Хăйĕн сăмахĕнче вăл çĕнĕ правительство умĕнче тăракан задачăсем çинчен асăннă. Хăйĕн сăмахĕнче Эррио конституцие тепĕр хут пăхса тухма кирли çинчен каланă. Конституцие тепĕр хут пăхса тухни демократие хирĕçле ĕç туни пулать. Францири реакциллĕ вăйсем вăл конституцие, паллă ĕнтĕ, правительствăна «ирĕклĕн ĕçлеме», ăна «декретсем-законсем» текенскерсем пулăшнипе управлени ĕçне туса пыма май парас тесе конституцие тепĕр хут пăхса тухасшăн. Çапла туса вĕсем парламентăн правительство ĕçне тĕрĕслесе тăмалли правине пĕтерсе лартасшăн.

«Европа çарĕ» текенскерĕ çинчен тăракан ыйту пирки каласа, Эррио «Европăри оборона пĕрлешĕвĕ» текенскерне тумалли плансене критикленĕ.

### ПĂХĂР РУДНИКĔСЕНЧЕ ĔÇЛЕКЕН РАБОЧИСЕН ÇĔНТЕРĔВĔ

МОНТЕВИДЕО, январĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Аргентинăри «Ла насьон» хаçат Чилири пăхăр рудникĕсенче ĕçлекен 6.500 рабочин забастовки вĕçленни çинчен пĕлтерет. Забастовка 3 эрне хушши пынă. Рабочисем ĕç укçине ÿстерессе çинчен лартнă требование тата ытти требованисене те пурнăçлаттарма пултарнă.

### США сенатĕнче

ВАШИНГТОН, январĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). США сеначĕ ют çĕршывсем енĕпе ĕçлекен комисси составне çирĕплетнĕ. Çав комиссин председателĕ пулма Уайли сенатор-республиканеца (Висконсин штатĕнчен) уйăрса лартнă.

Бриджес сенатор-республиканеца (Нью-Гемпшир штатĕнчен) укçа-тенкĕ уйăрса нарас тĕлĕшпе ĕçлекен комисси председателĕ пулма, Салтонстолл сенатор-республиканеца (Массачузетс штатĕнчен) — хĕçпăшаллă вăйсем енĕпе ĕçлекен комисси председателĕ пулма, Маккарти сенатора (Висконсин штатĕнчен) — исполнительнăй органсем тăвакан расходсем енĕпе ĕçлекен комисси председателĕ пулма уйăрса лартнă. Çавăн пекех ытти комиссисен председателĕсене те уйăрса лартнă.

### РАБОЧИСЕНЕ УШКĂНĔ-УШКĂНĔПЕ ĔÇРЕН КĂЛАРСА ЯРАÇÇĔ

БЕРЛИН, январĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем Хĕвеланăç Германири заводсемпе предприятисенчи рабочисене каллех ĕçрен кăларса яни çинчен, ĕç тупайманнисен хисепĕ ÿссе пыни çинчен çыраççĕ. «Броун Бовери Аг» компанийĕн Гросаухеймра (Ханау районĕ) вырнаçнă предприятийĕсенчен пĕринче кĕске вăхăт хушшинче 500 рабочие ĕçрен кăларса янă.

Бремен хулинчи «Голиат-аутомобильверке» завочĕн дирекцийĕ çĕнĕ çул пуçланнăранпа 229 рабочие ĕçрен кăларса янă.

Хĕвеланăç Германири 4 автомобиль концернĕсен администрацийĕсем нумаях пулмасть рабочисене эрнере кашни кунах ĕç тупса пама пултарайманни çинчен пĕлтернĕ.

Берлинăн хĕвеланăç секторĕнче хутран-ситрен кăна ĕçлекенсен хисепĕ 1952 çулхи ноябрĕн 10-мĕшĕнчен пуçласа декабрĕн 10-мĕшĕччен 1.136 çынна çитнĕ.

## Ухсай Якковĕн поэмине вырăсла пичетлесе кăларнă

Республикăри ĕççыннисем Чăваш АССР халăх поэчĕ Ухсай Яковĕ çырнă «Çул» поэмăна лайăх пĕлеççĕ. Унта колхозлă ял, унăн çыннисем çинчен каланă. Халĕ çак кĕнекене вырăсла куçарса Мускавра пичетлесе кăларнă кĕнеке «Перевал» ятлă. Поэмăна вырăс поэчĕсем П. Дружинин, В. Иринин тата В. Цвелев куçарнă, А. Морозов художник тунă ÿкерчĕксемпе илемлетнĕ.

Кĕнеке тиражĕ 10 пин экземпляр, хакĕ 7 тенкĕ те 50 пус. Ăна республикăри кĕнеке магазинĕсенче сутма пуçланă.

### Корреспондентсемпе стена хаçат редакторĕсен канашлăвĕ

КРАСНОАРМЕЙСКИ. Çак кунсенче районти «Коммунизм çулĕпе» хаçат корреспонденчĕсемпе стена хаçат редакторĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ.

Партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсем тата пичет умĕнче тăракан задачăсем çинчен КПСС райкомĕн секретарĕ М. Т. Сперанский юлташ доклад туса пачĕ. Ялсенчи, предприятисенчи стена хаçачĕсене мĕнле кăлармалли çинчен «Коммунизм çулĕпе» хаçат редакторĕ Л. Семенов юлташ доклад турĕ.

Тухса калакансем район хаçатĕнчи çитменлĕхсем çинчен каларĕç. Хаçатра критикăлла статьясем, фельетонсемпе очерксем ытларах пичетлеме сĕнчĕç. «Волга» колхозри «Коммунизмшăн» стена хаçачĕн редакторĕ Е. Димитриева стена хаçатне мĕнле кăларни тата хаçат тавра колхозниксем таччăн çыхăнса ĕçлени çинчен каласа пачĕ.

Канашлура пулнисем районти «Коммунизм çулĕпе» хаçата тата лайăхрах кăлармалли, стена хаçачĕсене содержани енчен çÿлти пусăмра кăлармалли çинчен каласа хăварчĕç. А. ИВАНОВ.

### Кантăр вăрри памалли плана ирттерсе тултарнă

ИШЛЕЙ. Районти малта пыракан колхозсем государствăна сÿс-кантăр тата кантăр вăрри памалли обязательствăсене чыслăн пурнăçлаççĕ. «За коммунизм» колхоз çак тивĕçе районта чи малтан тата ирттерсе пурнăçларĕ. Государствăна лайăх кантăр сÿсĕпе кантăр вăрри парса, артель 68.172 тенкĕ укçа илчĕ. Кунсăр пуçне, государство колхоза тулă, туранă, ÿсентăран çăвĕ нумай парать.

Кăшавăш ял Советĕнчи «Красный плуг», Ишекри «Сталинская гвардия» тата «Правда», «Знамя труда», «Большевик», «Броневик», Сталин ячĕпе, Хрущев ячĕпе, Карл Маркс ячĕпе тăракан колхозсем, районĕпе пурĕ 14 колхоз государствăна кантăр вăрри памалли плана тултарчĕç. Çапла вара, район государствăна техникăллă культурăсен вăрлăхне памалли обязательствăна кăçалхи январĕн 5-мĕшĕ тĕлне 103,9 процент пурнăçларĕ. В. ЧЕРНОВ.

### Çитес навигацие хатĕрленеççĕ

УЛАТĂР. Сăр шывĕн агентствинче ĕçлекенсем çитес навигацие тăрăшса хатĕрленеççĕ. Лоцмансемпе пăрахутсен механикĕсем хатĕрлекен курс уçнă. Курсра занятисем расписани тăрăх пулса пыраççĕ.

Иртнĕ çулта Сăр шывĕн агентстви пысăк çитĕнÿсем тунă. Халăх хуçалăхĕнче кирлĕ тĕрлĕ таварсене планран ирттерсе 6.650 тонна ытларах турттарнă.

Пассажирсем илсе çÿрекен «В-114» газоход коллективĕ лайăх ĕçленĕ, плана 123 процент тултарса, заданирен ирттерсе 8 пин çын ытла лартса çÿренĕ. Çавăн пекех «Зубр», «Октябрина» тата ытти пăрахутсем те сезонти задание 1,5—2 хут ирттерсе тултарнă.

Халĕ çитес навигацие хатĕрленсе газоходсемпе пăрахутсене юсаççĕ, квалификацие ÿстермелли курссенче 72 çын вĕренет. И. ГРИГОРЬЕВ.

### ПЫСĂК ВЫЛЯВ

ЕТĔРНЕ. Районти ĕççыннисем государство заемĕсем тăрăх выляв укçи илеççĕ. Нумаях пулмасть Етĕрнери перекет кассине А. гражданин пынă. Вăл государствăн 1948 çулта кăларнă 2 процентлă заемĕн облигацийĕсене тĕрĕслеттернĕ. Перекет касси çав заемăн 200 тенкĕлĕх облигацийĕпе А. гражданин 50.000 тенкĕ выляса илнине палăртнă. Г. МЫТИКОВ.

### Пĕлтерни

Январĕн 17-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, КПСС хула комитечĕн библиотека çуртĕнче докладчиксемпе агитаторсем валли инструктивлă доклад пулать. Тема: «29 çул Ленинсăр, Сталин юлташ ертсе пынипе Ленин çулĕпе».

Докладчик—М. Я. Буркова юлташ.

КПСС ХУЛА КОМИТЕЧĔ.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.


ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ

Паян, январĕн 17-мĕшĕнче, чăвашла спектакль «ПАРНЕЛЛЕ ТУЙ»

Ыран, январĕн 18-мĕшĕнче, ирхине—вырăсла спектакль «ЗЕМНОЙ РАЙ»

каçхине—чăвашла спектакль «СЕНКЕР КУЛĔ»

Кăнтăрлахи спектакльсем 12 сехетре, каçхи спектакльсем 20 сехетре пуçланаççĕ.


## Картинăсен выставки

Иртнĕ çулхи декабрĕн 10-мĕшĕнчен пуçланса кăçалхи январĕн 10-мĕшĕччен харпăр хăй тĕллĕн вĕреннĕ художниксем тунă картинăсен республикăри выставки пулса иртрĕ.

Выставкăна 97 художникран 285 ĕç килнĕ. Комисси çак ĕçсене пăхса тухса 54 художникăн 130 ĕçне республикăри выставкăна тăратнă.

Выставкăра пулнă А. Поляков доцент курма пыракансен кĕнеки çине «Эпĕ ку выставкăра пирĕн чăваш халăхĕ талантсемпе пуяннине кăна мар, унăн культури çав тери ÿсине куратăп», тесе çырнă.

Выставка залне кĕрсен, чи малтан, Çĕмĕрле комбинатĕнче ĕçлекен А. Шуваловăн йывăç çине касса тунă Кремль башнине куратăн. Автор ку ĕçе «Сталин çинчен хунă юрă» тесе ят панă. Башньăн тăвата енне А. Сурковăн «Сталин çинчен хунă юрăн» текстне çырнă. Çавăнтах касса икшер композици ÿкернĕ. Унта «Халăх Сталин çинчен юрă хывни», «Телейлĕ ачалăх», «Коммунизмăн аслă стройки», «Тулăх уй-хир», «Мускаври университетăн çÿлĕ çурчĕ», Тăван çĕршывăн пуянлăхĕ» тата Сталин портречĕ. Саксене Шувалов пысăк ăсталăхпа тунă. Башньăна чăваш тĕррисен орнаменчĕсемпе илемлетнĕ. Ку башньăна Шувалов юлташ ĕçрен пушă вăхăтра тунă, çулталăк ытла ĕçленĕ.

Халăх хушшинчен тухнă мастер Шувалов йывăç çинче касса çав тери ĕнентерÿллĕ те илемлĕ япаласем тума пултаракан художник пулнине кăтартса пачĕ.

Улатăрти чугун çул клубĕнче ĕçлекен А. Г. Линков выставкăна «Путевой обходчик» ятлă картина тăратнă. Ку картина чугун çул çинчи чи лайăх рабочин ĕç вăхăтне кăтартать. Картинăна Линков чăн-чăн профессиллĕ ăсталăхпа ÿкернĕ.

В. Я. Яковлевăн (Шупашкар хули) выставкăра ултă ĕç. Вĕсем пурте аван. Пуринчен ытла «Ялхуçалăхĕнче малта пыракансене награда пани» тата «Çамрăк краеведсем» ятлă картинăсене лайăх тунине палăртмалла. Яковлев тематикăллă картинăсене композици тĕлĕшĕнчен тĕрĕс тума тата, çынсене чĕрĕ пекех ÿкерме пултарать. Пейзажлă картинăсем те кăмăла каяççĕ.

Улатăр хулинчи çамрăк рабочин Н. Шмагинăн творчестви интереслă. Вăл выставкăна тăватă картина тăратнă. Шмагин портретсем ÿкерме ăста. Унăн «Пионерка», «Старик» портречĕсем куракансене илĕртеççĕ. Вăл сăрсемпе пĕлсе усă курса, портретсене тĕрĕс ÿкерсе кăтартать.

Çуллă сăрсемпе ÿкернĕ картинăсенчен В. Беляевăн (Елчĕк районĕ) «Степанов колхозникăн портречĕ», «Арбузсем», И. Истоминăн (Канаш районĕ) «Канашри çĕнĕ вокзал строительстви», «Хутăш вăрман», М. Крыловăн (Вăрнар поселокĕ) «Пионерсем походра». В. Романовăн (Улатăр хули) «Лаборантка» картинисене палăртса хăвармалла.

Графикăлла произведенисенчен М. Уткин (Канаш хули) выставкăна «Вăрманти çул», «Кÿлĕ» картинăсене тăратнă. Вăл кăранташпа е тушпа картинăсене пурнăçри пек тĕрĕс ÿкерсе кăтартма пултарать.

Графикăлла произведенисенчен С. Андриянованăн (Шăхасан районĕ) «Çеçпĕл Мишши портречĕ», «Нарспи» поэма валли тунă картинăсем, В. Беляевăн «Этюдра», «Малтанхи юр», «Колхоз тимĕрçи», Т. Васильевăн (Тăвай районĕ) «Ковер эскизĕсем» куракансене кăмăла каяççĕ.

Пулса иртнĕ выставкăра тĕрĕ ăстисен ĕçĕсем пĕтĕм экспонатсенчен çуррине яхăн йышăнаççĕ. Ку вăл пирĕн республика тĕрĕ ăстисемпе пуяннине кăтартса парать.

Тĕрĕсенчен Е. Пустынникăн (Шăхасан районĕ) Ленин, Сталин портречĕсем, «Телейлĕ ачалăх» картини куракансене тĕлĕнтерет. 65 çулхи килхуçи хĕрарăмĕ Н. Тихомирова (Шăхасан районĕ) чăн-чăн тĕрĕ ăсти. Вăл тĕрлесе тематикăллă картинăсем тăвать. Унăн «Мир кăвакарчăнĕ» ятлă картини выставкăра чи паха ĕçсенчен пĕри шутланать.

Ытти тĕрĕсенчен И. Данилова, О. Ярославцева, С. Морозова, С. Михайлова (Шупашкар хули), И. Иванова (Шăхасан районĕ) тунă ĕçсене палăртас пулать.

Шупашкар хулинчи 2-мĕш вăтам шкулта ĕçлекен А. Николаевăн Сталин, Суворов, Гоголь, Шопен бюсчĕсен скульптурисем выставкăра хисеплĕ вырăнта шутланаççĕ.

Октябрьски районĕнчи «Культура» колхозăн «Стахановец» ятлă стена хаçатне иртнĕ çулхи выставкăсем тăрăх пирĕн республикăри ĕççыннисем аван пĕлеççĕ. Ку выставкăна та «Стахановец» хаçатăн вунă номерне тăратнă. Хаçатăн редакторĕ тата художникĕ Ц. Андреев хăй ĕçне çав тери тăрăшса, юратса тунине куратпăр. Кăçалхи январĕн 22-мĕшĕнче «Стахановец» хаçат тухма пуçлани 25 çул тултарнине уявласа ирттереççĕ.

Пĕр уйăх хушшинче выставкăра 7 пин çын ытла пулнă.

Комисси выставкăри чи лайăх ĕçсене Мускавра уçăлакан Пĕтĕм Союзри выставкăна яма палăртнă.

Н. АМУРЦЕВ,
Чăваш АССР халăх творчестви çуртĕн директорĕ.


РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—3-99, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ 7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 01221 Типография №1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.